Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ФЕВРАЛЬ 5 ШАМАТКУН 29 (4842)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

20-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Чувашская Ц. Б-ка [illegible]

КАРЙЕРИССЕМПЕ ХĂЙСЕН ТИРĔШĔН ХĂРАКАНСЕНЕ НИМ ХĔРХЕНŬСĔР ТĂРĂ ШЫВ ÇИНЕ КĂЛАРМАЛА

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн йанвар уйăхĕнче пулнă Пленумĕ йышăннă постановленийе пирĕн пĕтĕм парти тулли кăмалпа ырласа йышăнчĕ. Партипе çĕршыв Тĕп Комитет Пленумĕн ви ĕрех политикăлă ăслăлăх палăрса тăракан постановлени çыншăн, парти членĕшĕн, работникшĕн сталинла тăрăшни çинчен татах тепĕр хут вуларĕç.

Парĕн парти хăйĕн речĕсене троцкисла бухаринла фашисла бандитсенчен, çĕрĕк елементсенчен, партишĕн йут çынсенчен тасатас тĕлĕшпе историйĕ пиг пысăк ĕç туса ирт рчĕ. Çак тасату ĕçĕ пĕтĕм тĕнчене парти тимĕр пекех çирепипине, вăл Сталинла Тĕп Комитет тавра тачă пĕтĕçсе тăнине, унăн кĕрешŭлĕ хатĕрлĕхне, вăл халăхпа тарăнан, тач тăван çыхăнса тăнине кăтартса пачĕ.

Сталинла Тĕп Комитет пĕтĕм партийе лăпланса ларасран сыхланма хушать. ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн йанварти пленумĕ йаланах большевикла сыхăлăхлă пулмали çинчен татах çирĕплетсе каларĕ. Пар ин тăшмавесене пурне те уçса палăртса тăрă шыв çине кăларман ха. Халăх тăшманĕсем—фашисăм агенчĕсем, шпионла диверсантла ирсĕрсем—çĕнĕ майсемпе пытанса сăтăр тума тăрăшаççĕ. Ухмах чирĕ—тимсĕрлĕх кăшт пулин палăрни те чейе те усал тăшмана вальли хушăк уçса парать.

Ленин—Сталин партийĕ большевиксене, йачĕшĕн çеç мар, чăннипе сыхăлăхлă пулма хушать тата хăшпĕр чухне çухрашка-карйериссем хыççăн кайакан парторганизацисене астугарать.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ хăйĕн постановленинче: партирен кăларас ыйту çине, партирен кăларнисен жалăбисене пăхса тухас ыйту çине çавăн пек ниме уйамасăр, чунсăр-механически, автоматла пăхни „...чи малтан, коммуниссем хушшинче уйрăм карйерис-коммуниссем, партирен кăларнипе, парти членĕсене хĕсĕрленипе паллă пулса мала тухма тăрăшакан, хăйсене сыхăлăх çителĕксĕр тесе айăплани пулма пултарасран парти членĕсене нимĕнле сăлтавсăр хĕсĕрленипе хăйсене тасача кăларма тăрăшакан çынсем пур пирки, вĕсене уçса палăртса тăрă шыв çине кăларман пирки" пулма пултарнă, тесе кăтартса пачĕ.

Карйерис, хăйшĕн, хăйĕн меллĕ те канлĕ пурнăçĕшĕн пуринчен те ытларах тăрăшса, ответлăхран хăрать, ответлăхран пăрăнать. Вăл пурнăçра темĕн килсе тухсан та тасан йулмаливе тупса хума тăрăшать. Çавăнпа çавнашкал коммунис, ăна коммунис теме йурать пулсан, партирен кăларнипе мала тухасшăнскер, парти членĕсене хĕсĕрленипе таса пуласшăнскер, калама çук ирсĕр ĕçсем тăвать. Карйерис хăйĕн елеклĕ ĕçĕсене пĕр тĕллевпе: хăй мала тухас тесе, сыхăлăх çук тесе айăплани пулма пултарасран хăтăлас тесе, вăл хăй тăшмансене тăрă шыв çине кăлартăм тесе мухтава тухма тăвать.

Большевиксен çĕнтерŭлĕ партийĕ сумне çыпçăнакан ылханлă çынсене хирĕç, хăйсен тирĕшĕн çеç тăрăшакансене—карйериссене хирĕç, пирĕн парти йаланах пит хăйарран, ним хĕрхенŭсĕр кĕрешсе пынă. Ленин карйеиссене, хăшпĕр чухне парти политикне пурнăçа кĕртессине пăсса хуракансене, массăсем çине чăрсăрла, намăссăрла, вылăхла пăхакансене, нимĕн хĕрхенŭсĕр тыткалама хушнă.

Карйерисăм, ĕлĕк çын çине чунсăр-бŭрократла пăхни—капиталисăмран йулнă мăшкăлтăксем пулса тăраççĕ, çавсене хирĕç нимĕн хĕрхенŭсĕр вăрçă пуçармала. Карйерис-коммуниссене уçса палăртма, вĕсем çинчи суйа сыхăлăх маскине сĕвсе ывăтма, вĕсене тăрă шыв çине кăларма вăхăт ĕнтĕ. Карйерис партийе ултавпа кĕнĕ,—вăл партирен кăларĕç тесе хăрать Çавăнпа вăл паника, çухрашу, вĕркĕшŭ сарать. Çавăнпа вăл çăмăллăнах мĕнле те пулин формальнăй сăлтавпа йе нимĕнле сăлтавсăрах çынсене партирен кăларма ыйтать. Уншăн пулсан айăпа кĕнĕ парти членĕсене—партирен кăлармала, урăх майсем уншăн пулсан çук. Карйерис-коммунис партин айăпа кĕнĕ членĕсене урăхла наказани пама сĕнекен йулташсене хирĕç сиксе тухать те, нимĕн шухăшласа тăмасăрах, вĕсен çумне тăшмансене пулăшакансем тесе йарлак çыпăçтарать.

Çапла тунипе карйериссем парти тăшманĕсенчен, халăх тăшманĕсенчен, пытанса йулнă троцкисла-бухаринла бандитсенчен тасатас ĕçе йăвăрлатаççĕ, çав бандитсемпе çавнашкалах партин тŭрĕ членĕсене хирĕç елек сарнипе тата провокаци тунипе уса кураççĕ Тăшмансене усă кŭрекен карйериссен мĕн пур махинацийĕсене уçса палăртас вырăнне парти организацисен хăшпĕр руководителĕсем хăйсем те час-часах вĕсене парти речĕсен тасалăхĕшĕн сыхăлăхлан кĕрешекенсен ореолĕпе витеççĕ. Ку тĕлĕшпе Хабаровск парторганизацинчи Угроповăн мухтавсăр ĕçĕ кăтартулă пулса тăрать, вăл хăйне вальли „сыхăлăхлă çын" чапĕ туса партин тŭрĕ членĕсене пур майсемпе те варалана. Карйериссем çинчен маскăсене сŭсе илмеле, конкретлă примерсем тăрах чăн-чăн сыхăлăхлă пулма вĕрентмеле — кашни организацин пĕрремĕш задачи çакăн пек ĕнтĕ.

Карйерис коммуниссем çине либералла пăхнине Орджоникидзе организацинчи хăшпĕр руководителсем кăтартса пачĕç. Унта 1905 çултанпа парти членĕнче тăракан Петров коммунис ĕçе çинчен лайăх пĕлеççĕ, елекçĕсем Петрова хирĕç вăл халăх тăшманĕсемпе пĕр обществăра пулнă тесе айăпласси не пŭрнерен ĕмсе кăларнă. Петров йулташ çинчен пăсăлса кайнă тип, темĕнле Савинов елек сарнă. Халь ĕнтĕ Петров йулташа тŭрре кăларнă, анчах çак ĕçрен инçех кайман. Тŭрĕ çынсем пирки лапăрчăк зайавлени муталаса пурăннă ирсĕр елекçĕне крайком тĕкĕнмесĕрех хăварнă.

Саратов организацинче Гаранина карйерискăн сăн-сăпатне партин нумай членĕсемпе руководителĕсем лайăх пĕлеççĕ, çав карйерискă парти членĕсем çинчен елек сарассине хăйĕн професçийĕ туса хунă. Облăçри парти органĕсенче Гаранинă зайавленийĕсем 40 йахăнах пухăнса выртнă. Вăл çынсенчен илтнĕ елеклĕ сăмахсемпе усă курать. Вăл хăйĕн зайавлевисене çакăн пек сăмахсемпе пуçлать: „мана пĕлтерчĕç", „епĕ илтрĕм", „çак факт тĕрĕс пулсан, вара...„ т, ыт. те. Гаранивăна революцилĕ сыхăлăха мăкатнăшăн парти членĕнчен кандидата куçарнă пулнă, халь вăл пур майсемпе хăйне страхлать. Тĕлĕнмеле, партин Саратов обкомĕ çак карйерискăна халиччен нех тĕкĕнмесĕр тăрать, унăн партине хирĕçле ĕçне тăрă шыв çине кăлармасть. Салтыков-Шедрин çырнă: „елек вăрттăн саралать, унăн вĕçне тупма май çук. Çапла пулин те елекçĕн лару-тăрувĕ питĕ хăрушă пулмала. Унăн кашни минутрах хăйне тупса палăртасран хăрамала". Пур елекçĕсене, карйерис-коммуниссене тăрă шыв çине кăлармала, вĕсен вараланчăк ĕçĕсене айăпламасăр хăварма йурамасть. Парти руководителĕсен хисеплĕ ĕçĕ организацире чăн-чăн большевикла сыхăлăх пулмала лару-тăру тумала, тасвран парти членĕсем çинчен елеклеме май ан пултăр.

Кашни большевикăн обйазаннăçĕ—партине хирĕçле етемсене, халăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларасси пулать. Парти членĕн йаланах сыхă тăмала, тăшман темĕнле чейен тата вăрттăн ĕç тума хăтланни çинчен те çийĕнчех сигнал памала. Парти организацисен парти членне айăплакан ĕççене тĕплĕн тĕрĕслесе пĕлмеле.

ПСК(б)П Тĕпком Пленумĕн постановленийĕ карйерис-коммуниссен усалçĕн меслечĕсемпе майĕсене тăрă шыв çине кăларать, вĕсемшĕн характерлă паллисене тупса палăртать. Парти членĕсене кăлăпăшпе айăпламала мар, партирен кăларнисене кăлăпăшпе çăмăллăх памала мар. Парти пур организацисене те партирен кăларас ыйтусене татса панă чухне кашни çын çине уйрăмăн пăхма, пур материалсене тĕплĕн тĕрĕслеме, питĕ сыхă пулма, питĕ асăрхуллă пулма, парти членĕн кунçулне татса панă чухне йулташла тăрăшма хушать. Партирен кăларнипе ырра тухма, тŭрĕ ĕçлекен большевиксене хирĕç репресçи тунипе хăйсен тăпмаила ĕçне витсе хăварма хăтланакан карйериссене парти тŭсме пултараймасть, вăл вĕсене тăрă шыв çине кăларать.

(„Правда" умстатйи).

Г. И. Петровский 60 çул тултарчĕ

Григорий Иванович Петровский — ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн председател заместителĕ. (Сойузфото).

ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиумĕ Г. И. ПЕТРОВСКИЙ йулташа вăл 60 çул тултарнă йатпа саламлани

Хаклă Григорий Иванович!

Есĕр утмăл çул тултарнă кун ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиумĕ Сире хĕрŭлĕн саламлать.

Сирĕн пурнăçри хĕрĕх çулĕ ытла Ленин—Сталин партин ĕçĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешнипе иртрĕç. Сирĕн пурнăç, борец-революционерăн пурнăçĕ, государствă ĕçĕсене туса пыраканăн пурнăçĕ, хăйĕн пĕтĕм вăйне халăх ырлăхĕшĕн паракан большевикăн иксĕлми хăвачĕпе тулли пулчĕ.

ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиумĕ Сире тата нумай çулсем хушши социалисăмла тăван çĕршыва усă кŭрсе ăнăçлă ĕçлесе пыма ырă сунать.

ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиумĕ.

Григорий Иванович ПЕТРОВСКИЙ йулташа

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕпе ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, Есĕр утмăл çул тултарнă кун, Сире,—Ленин гвардинчи ватă большевика—хĕрŭллĕ салам йараççĕ.

Есĕр хăвăрăн пурнăçри хĕрĕх çула ытла рабочи класпа хресченсен ĕçĕшĕн патăр. Есĕр вăрттăн ĕçленĕ вăхăтра тата государствă думинче большевикла ĕçлесе пытăр, Есĕр Ленин—Сталин партин ĕçĕшĕн йаланах пĕтĕм чĕререн тăратăр, рабочисемпе хресченсен йышлă массисемпе çывăх пулса ĕçлесе пытăр. Сирĕн пурнăçра пысăк опыт пур тата Есĕр нумай çулсем хушши Украинă ССР Тĕпĕçтăвкомĕн председателĕ пулса ĕçлерĕр,—çавăнпа ĕнтĕ Сире Совет Сойузĕнчи халăхсен йышлă массисем шанса тăраççĕ тата йуратаççĕ.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕпе ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Сире, Украинă халăхне тата пĕтĕм Совет Сойузĕнчи халăхсене усă кŭрсе ăнăçлă ĕçлесе пыма тата нумай çулсем хушши сывă та хаваслă пурăнма ырă сунаççĕ.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ.
ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ.

Биографилĕ справкă

Большевикла партин ватă членĕ, чĕрĕслоннĕ çирĕп революционер—Григорий Иванович Петровский çурални февралĕн 4-мĕшĕнче 60 çул тултарчĕ.

Г. И. Петровский чухăн çын çемйинчен тухнă. Унăн аслашшĕ крепостной хресчен пулнă, ашшĕ—ремесленник-çĕвĕç. Петровский йулташ мĕн ачаранпах патша режимĕн пĕтĕм йăвăрлăхĕне пусмăрлăхне, чухăн пурнăçа, експлоатацине хăйĕн син че тŭссе курнă

Г. И. Петровский 1878 çулхи февралĕн 4-мĕшĕнче Харьковра çуралнă. Вицĕ çула çитсен унăн ашшĕ вилсе кайнă. Петровский çемйине йăвăр нуша килсе тухнă. Петровскин амăшĕ, кун тăрăх ĕçленипе аран-аран пурăнакан скер, ывăлне вĕрентме пултарайман. Шкулта вăл икĕ çул çурă анчах вĕреннĕ, вĕренŭ правишĕн укçа тŭлеймен пирки ăна шкултан кăларса йанă

Çамрăк Петровский унтан Харьков çывăхĕнчи Курско-Харьковско-Севастопольски чукунçул мăстерскойне ĕçлеме кĕнĕ, унта вăл ĕçленĕшĕн кунне 20 пус илсе пурăннă. Анчах мастăр мăшкăлани çинчен жалăбă панăшăн ĕçрен часах кăларса йанă.

Г. И. Петровский нумай вăхăт хушши ĕç тупайман. Кун тăрăх ĕçлекен рабочи пулса вăл пĕчĕк укçашăн çулталăк çурă хушши ĕçлесе пурăннă.

Петровский йулташ Харьковран Пекатеринослава (Днепропетровск) куçма шут тытать. Пекатеринославра вăл малтанах Пекатеринослав чукунçулĕн мăстерскойне ученик шучĕпе ĕçлеме кĕрет, унтан Брйанск заводне (халь Петровский йачĕпе тăракан завод) кĕрет. кунта ăна кунне 35 пус ĕçукçи тŭлеççĕ. Заводра çамрăк Петровский, хăйне станок патне тăратаччен малтан, тимрĕç лаççинче, слесарнăйĕнче, подсобнăй ĕçе вĕренŭн мĕн пур тапхăрĕсем витĕр тухать.

Заводра ĕçукçи çав тери сахал пулнă. ĕçлĕ кун йăвăр та вăрăм пулнă. Мастăрсен мăшкăлĕпе чăрсăрлăхне, тискер експлоатацине, полици хĕсĕнине тŭсме тивнĕ. Çаксем пур те рабочисене тарăхтарнă.

Експлоататорсене тата самодержавин тискер режимне хирĕç рабочи массисем тарăхасси вăйланса пынă.

1897 çулта Пекатеринославра Петербургри рабочи-революционерсен улкăнне йанă. Г. И. Петровский вĕсемпе сыхарать. Вĕсем ăна пролетариатăн революцилĕ задачисене ăнланса илме пулăшаççĕ. Вăл революцилĕ йухăма хутшăнать те Российăри Социал-Демократилĕ Рабочи Парти ретне кĕрет.

1898 çулта çулла Брйанск заводĕнче забастовкă сиксе тухнă, вăл забастовкăна Григорий Иванович активлăн хутшăнать.

Тепĕртак вăхăт иртсен, Петровский йулташ Харькова куçать. Вăл унта паровозсем йусакан заводра ĕçлет. Унтан Николайева кайать, ытти йулташсемпе пĕрле вăл Николейев хулинче революцилĕ пысăк ĕç туса пырать, рабочи кружокĕсем организацилет. 1900 çулта çулла забастовкăсене хутшăннăшăн патша влаçĕсем Петровский йулташа Николайевран Пекатеринослава йараççĕ. Кунта Петровский йулташ вырăнти социал-демократла организацине çыхăнать те пуçĕпех революцилĕ ĕçе хутшăнать. Çу варринче полици Петровский йулташа арĕслет. Ăна тĕрмере пĕччен лармали камерта çулталăк хушши тытса усраççĕ. Тĕрмен йăвăр условисенче Петровский йулташ хăйĕн çирĕплĕхĕпе хăйулăхне çухатмасть. Тĕрмере вăл марксисла литературă вулать. хăйĕн пĕлŭне ŭстерет.

Тĕрмерен тухнă хыççăн, çĕнĕрен ан арĕслеччĕр тесе Г. И. Петровский Донбаса куçать. Вăл шахтăсенче икĕ çул çурă хушши ĕçлет. 1903 çулта ăна çĕнĕрен арĕслеççĕ, вăл вара тĕрмере ултă уйăх ларса тухать.

Тĕрмерен хăтăлса тухнă хыççăн Петровский йулташ Пекатеринослава ĕçлеме кĕрет, çав вăхăтрах 1905 çулхи революци пулать. Вăл Украинăри революцилĕ событисене активлăн хутшăнакансенчен пĕри. Пекатеринославри баррикадăлă çапăçусене йертсе пыракансенчен пĕрийĕ стачкă комитечĕн членĕ пулса, депутатсен Магатажни советне туна çĕре хутшăнса ĕçлет.

Украинăри ĕçсынисем Г. И. Петровскине пĕлеççĕ, ăна шанаççĕ. Ăна малтан цехри депутата суйлаççĕ, унтан рабочи депутатсен Пекатеринославри совечĕн депутатне суйлаççĕ.

1905 çулхи революцие пусарнă хыççăн, патша правителстви репрессисем тунă чухне Петровский йулташ пытанса пурăнать. Вăл хăшпĕр вăхăтлăха йут çĕре тухса кайать. Анчах часах çĕнĕрен Российăна таврăнать те Мариупольре вырнаçать, унта вăл патша полицийĕ хăйарран хĕсĕрленине пăхăнмасăрах, революцилĕ ĕç туса пырать.

1912 çулта IV-мĕш Государствă Думине суйлаççĕ.

Государствă Думинче большевикла парти хăйĕн фракци пулнă, вăл фракцире рабочи курисем тăрăх рабочи класс суйланă рабочи депутатсем тăнă. Г. И. Петровский—большевикла фракцин малтанхи членĕсенчен пĕри

1914 çулхи нойабĕрте патша правителстви большевиксен Думăри фракцине арĕслесе Хĕвелтухăç Çĕпĕре сылкăна йарать. Г. И. Петровскине Туруханска йанă Кунта вăл çулталăк пурăннă, унтан Йакут облаçĕнчи Средне-Колымска йанă. Вăл Йакутскра чухне 1917 çулхи Февраль революцийĕ пулса иртет

Октйабĕрти переворот хыççăн Г. И. Петровскине РСФС Республикăн Шалти ĕçсен Халăх Комиссарне уйăрса лартаççĕ.

1919 çулта Советсен Украинăри çиеçĕ Петровский йулташа Украинă СС Республикăн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Председателне суйлать. 1922 çулта Петровский йулташа çавăн пекех тата ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Председателне суйлаççĕ.

ПСК(б) Партин 9-мĕш çиеçĕнче 1920 çулта Г. И. Петровскине Тĕпком членĕн кандидатне тата 10-мĕш çиеçра—ПСК(б)П Тĕпком членне суйлаççĕ.

Партин 14-мĕш çиеçĕ хыççăн, 1926 çулта, Петровский йулташ—ПСК(б)П Тĕпкомĕн Политбŭро членĕн кандидачĕ.

Петровский йулташ çавăн пекех тата Украинă К(б)П Тĕпкомĕн Политбŭровĕн членĕ пулса ĕçлет.

1937 çулхи декабĕрте Днепропетровск суйлав округĕнчи ĕççыннисем Г. И. Петровскине ССР Сойуз Аслă Совечĕн депутатне суйлаççĕ. Аслă Советăн пĕрремĕш Сессинче Петровский йулташа Аслă Совет Президиумĕн Председател заместителне суйланă.

Г. И. Петровскин революцилĕ çулĕ çакăн пек ĕнтĕ.

Г. И. Петровский хăйĕн пурнăçĕнчи 40 çулне ытла рабочи класпа хресченсен ĕçĕшĕн панă.

Вăл патша тискерлĕхĕнчен пытанса пурăннă чухне тата Государствă Думинче большевикла ĕçленĕшĕн, вăл Ленин—Сталин парти ĕçне чунтан-чĕререн йуратса тăрăшса туса пынăшăн, вăл ĕççынни массисемпе сыхăну тытнăшăн, вăл Украина СС Республикăн Тĕпĕçтăвком Председателĕ пулса нумай çулсем хушши ĕçленĕшĕн ăна Совет Сойузĕнчи йышлă халăх массисем шанаççĕ тата хисеплеççĕ.

Вăл 60 çул тултарнă кун Ленин гвардинчи ватă большевика ĕççыннисем хаваслăн саламлаççĕ.

(ТАСС).

„Çурçĕр польусĕ" станцинче шторм лăпланать

МУСКАВ, 3-II (ТАСС). Совет çĕршывĕн тăватă геройĕ йăвăр условисенче те хăйулăха çухатмаççĕ. „Çурçĕр польусĕ" станцин радиостанцийĕ пăр татăкĕ çинче вырнаçнă, таврари пăр уйĕсем те ваклanса пыраççĕ. Çапла пулин те радиостанци, йаланхи кунсенче пекех, кашни ултă сехетренех унта мĕнле çанталăк тăни çинчен пĕтĕм тĕнчене пĕлтерет.

Февралĕн 2-мĕшĕнче тепĕр пăр татăкĕ çине куçса ĕлкĕрсенех Папанин ушкăнĕ çанталăк çинчен черетлĕ сводкă панă: „Йурлă-çăмăрлă çавать, тĕтре, çурçĕр-хĕвелтухăç йенчен икĕ баллă çил вĕрет, сивĕ 11 градус".

Тепĕр ултă сехетрен çĕнĕ сводкă: станци районĕнче температурă чакса пырать—сивĕ 14 градус.

Тата тепĕр сводка февралĕн 3-мĕшĕнче ирхине 6 сехетре панă: сивĕ 16 градус, çурçĕр хĕвелтухăç йенчен икĕ баллă çил вĕрсе тăрать. Хăйулă польарниксем 19 сехетре радио тăрăх татах пĕлтернĕ: станци координачĕсем—çурçĕр широтин 74 градус та 3 минучĕ, хĕвеланăç долготин 16 градус та 30 минучĕ. Станци районĕнче кăштах пелетлĕ, çил çурçĕр-хĕвеланăç йенчен вĕрет, сивĕ 18 градус..

Папанин йулташран илнĕ йулашки хыпарсем Гренланди тинĕсĕнче шторм лăпланса пыни çинчен калаççĕ.

Папанин йулташăн ушкăнĕнче геройсем хăйсен ĕçне пĕртте чарăнмасăр туса пыраççĕ.

ПАПАНИН ЙУЛТАШ ПАНĂ РАДИОГРАММĂ

„ÇУРÇĔР ПОЛЬУСĔ" станци, февралĕн 4 мĕшĕнче, 2 сехет те 18 минут (радио тăрăх) Папанинăн польар станци координачĕсем: çурçер широтин 74 градус та 3 минучĕ, хĕвеланăç долготин 17 градус та 30 минучĕ. Пурте йĕркелех. Лару-тăру лайăхланчĕ. ПАПАНИН.

Куçса çŭрекен пăр çинчи станци районĕнчи çанталăк

МУСКАВ, 3-II (ТАСС). „Çурçĕр польусĕ" станцинчен февралĕн 3-мĕшĕнче каçхине илнĕ йулашки сводкăра: станци районĕнче пĕтĕмпех тĕтрелĕ, çурçĕр-хĕвеланăç йенчен вицĕ баллă çил вĕрсе тăрать, сивĕ 16 градус, партак йур çавать, тесе пĕлтернĕ.

Çанталăк мĕнле тăни çинчен февралĕн 3-мĕшĕнче илнĕ сводкăсем Баренц тинĕсĕпе Гренланди тинĕсĕнче, çавăн пекех станци районĕнче те çанталăк мĕнле пуласси çинчен тĕплĕнрех калама май пăраççĕ. Çав пĕтĕм районра вăйлă циклон пулнă. Сăнаса пыни станци районĕнче пит вăйлă çилтăвăл (шторм) çак кунсенче текех пулмасть, тесе калама май парать.

„Таймыр" ледокол февралĕн 3-мĕшĕнче 14 сехетре Баренц тинĕсне тухса кайнă. Унта кăнтăр йенеле вĕрекен пит вăйлă çилтăвăл тăмала, вăл февралĕн 5-мĕшĕнче талăк иртнĕ тĕлеле кăштах лăпланмала. Гренланди тинĕсĕнче сивĕ 20—25 градус таран пуласса кĕтеççĕ. „Çурçĕр польусĕ" станцинче çил лăпланнипе тата çанталăк сивĕтнипе пăрсем пĕр çĕре пуçтаранса пĕр-пĕрин çумне шăнса çыпçăнма пултараççĕ.

Англи правителстви тунă ĕçсем

Англи йутçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден Францине Итали посолĕсене меморандум панă. Меморандумра: территори шывĕнче шыв айĕн çŭрекен кирек мĕнле кимĕ пуррине асăрхасанах ăна çийĕнчех тапăнса, пĕр системесĕр путараççĕ, тесе каланă.

Англи правителстви Англин патрульте тăракан карапсен хисепне ŭстерме кăтартусем панă та ĕнтĕ.

(ТАСС).

Тĕн—ăсран кăларакан наркăмăш йышши йапала, капитал чурисем çавăн ăшне хăйсен етем сăнне, мĕн чухлĕ те пулин етеме тивĕç пурнăç тăвас требованийĕсене путараççĕ

(ЛЕНИН)

ТĔН—СОЦИАЛИСĂМ СТРОИТЕЛСТВИН ХАЙАР ТĂШМАНĔ

И. В. Сталин йулташ—тĕн тĕшмĕшĕ тата ăна хирĕç кĕрешесси çинчен

„11-мĕш ыйту. Епĕр пĕлетпĕр, хăшпĕр лайăх коммунниссем, компарти пур çĕне членсем те атеиссем пулмала тенипе пиг килĕшсех каймаççĕ, мĕншĕн тесен, халĝхи вăхăтра реакцилĕ духовенствăна путарса лартнă. Компарти малашнехи вăхăтра тĕн тĕлĕшĕнчен, вăл (тĕн. ред.) пĕтĕм ăслăлăх хутне кĕрсе пырат, тата коммунисăма хирĕç тăмаст пулсан, унăн тĕлĕшĕнчен нейтраллă пулма пултарнă пулĕччĕши? Есĕр парти членĕсене, вĕсем партилĕ лойалĝнăçран тухмаççĕ пулсан, тĕн ĕненĕвĕсене тытса пыма ирĕк панă пулăттăрши?

Ответ. Ку ыйтура темиçе тĕрĕс мар вырăн. Пĕрремĕшĕнчен, кунта делегаци калаçакан „лайăх коммуниссене“ пĕлместĕп епĕ. Тĕнчере ун пек коммуниссем пур-ши вара. Иккĕмĕшĕнчен тата çакна каламала: формалĝнă илсен, парти членне илме парти членне илекен кандидатран обйазателнă атеис пулма ыйтакан услови çук. Партине илмели пирĕн условисем: парти программипе уставне йышăнасси, партипе унăн органĕсен решенисене пĕр пăркаланмасăр пăхăнасси, член укçи, партин пĕрпĕр организацинче тăрасси.

Делегатсенчен пĕри. Епе час-час, турра ĕненнĕшĕн партирен кăларна тесе çырнисене вулатăп.

Сталин. Епĕ партине илмели условисем çинчен каланисене тепĕр хут калама çеç пултарап. Урăх условисем пирĕн çук.

Çакă вăл парти тĕн тĕлĕшĕнчен нейтраллă пулнине пĕлтерети-ха? Çук, пĕлтерместь. Епĕр тĕн тĕшмĕшĕсене хирĕç пропагандă тăватпăр, малашне те пропагандă тăвăпăр. Çĕршыври саккун йĕрки тăрăх кашни гражданин кирек мĕнле тĕне те тытма пултарат. Ку ĕç кашнин хăйĕн совĕçĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ епĕр чиркӳве государствăран уйăртăмăр. Анчах та, чиркӳве государствăран уйăрнипе, тĕн йĕрки тытма ирĕклĕх пани çинчен пĕлтернипе пĕрлех епĕр çавă йе ку тĕне хирĕç, пур йышши тĕнсене те хирĕç, ĕнентерни тăрăх, пропагандăпа агитаци туни тăрăх кĕрешме кашни гражданина права патăмăр. Парти тĕн тĕлĕшĕнчен нейтраллă пулма пултараймаст, вăл пур тата пур йышши тĕн тĕшмĕшĕсене те хирĕç тĕне хирĕçле пропагандă тăват, мĕншĕн тесен, вăл (парти. Ред.) ăслăлăхшăн тăрат, тĕн тĕшмĕшĕсем вара ăслăлăха хирĕç пыраççĕ, мĕншĕн тесен, пур йышши тĕн те ăслăлăха хирĕçле йапала. Нумайах пулмаст, Америкăра дарвиниссене суд турĕç,—ун пек йапаласем пирĕн патăрта пулма пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен парти пур майсемпе те ăслăлăх хутне кĕрес политикăна тытса пырат. Парти тĕн тĕшмĕшĕсем тĕлĕшĕнчен нейтраллă пулма пултараймаст, вăл çак тĕшмĕшсене хирĕç пропагандă туса пырат, мĕншĕн тесен, çакăн пек туни вăл експлоататăрла классем хутне кĕрекен, çак классене пăхăнма вĕрентекен реакцилĕ духовенствăн влийанине пĕтерсе хумали тĕрĕс майсенчен пĕри пулат. Парти тĕн тĕшмĕшĕсене тытса тăракансем пирки, ĕççынни массисен ăспуçне минкертекен реакцилĕ духовенствă пирки нейтраллă пулма пултараймаст. Реакцилĕ духовенствăна путарса лартнă-и епĕр? Путарса лартнă. Анчах çакă пур: ăна пĕтĕмпех пĕтерсе çитереймен-ха. Тĕне хирĕç пропагандă—реакцилĕ духовенствăна пĕтерессине вĕçне çитермели май пулса тăрат. Парти членĕсенчен хăшпĕрисем йĕнчен тĕне хирĕç пропагандăна пур майсемпе те сарса пырассине хăш чухне кансĕрленисем те пулаççĕ. Çакăн пек парти членĕсене кăлараççĕ пулсан, ку вара пите аван, мĕншĕн тесен, çавăн пек „коммуниссене“ валĝи пирĕн парти речĕсенче вырăн çук.

(Сталин йулташ Америкăран килнĕ рабочисен пирвайхи делегацийĕпе 1927 ç. çентаберĕн 9-мĕшĕнче калаçнинчен).

Чиркӳве государствăран, шкула чиркӳрен уйăрни çинчен

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1918 çулхи йанварĕн 23-мĕшĕнче кăларнă декрет

1. Чиркӳве государствăран уйăрас.

2. Республика çĕршывĕнчи вырăнсенче совĕç ирĕклĕхне кансĕрлеме йе пулме пултаракан, йе гражданĕсем мĕнле тĕн тытнине кура мала хунисене йе привилегисем тума пултаракан йеплле те пулин саккунсем йе постановленисем кăларма чарас

3 Кашни гражданин кирек йеплле тĕн тытма та йе нимĕнле тĕн тытмасăр пурăнма та пултарат. Мĕнле те пулин тĕне тытнине кура йе нимĕнле тĕне те тытманнине кура правасăр хăварасси пĕтĕмпех пăрахăçа тухат

Асăрхаттарни. Пур официаллă актсенче те гражданĕсем хăш тĕне тытнине йе тытманнине мĕнле те пулин палла тăвассине пĕтерсе хумала.

4. Государствăн тата урăххисен обшчествăлă правалă установлени ĕçĕсене халăх умĕнче тунă чухне нимĕнле тĕн йĕркисемпе церемонисем те тумаççĕ.

5. Тĕн йăлисене туса пырасси, вăл обшчествăла йĕркелĕхе пăсмаст пулсан тата ăна тунă чухне Совет республикĕн гражданĕсен прависене пăсмаççĕ пулсан, ирĕклĕ пулат.

Вырăнти влаçсен çавăн пек чухне обшчествăлă йĕркелĕхпе хăрушсăрлăх пултăр тесе тумали ĕçсене пурне те тума права пур.

6. Тĕн шухăшĕсене пула хăйĕн обшчествăлă обйазаннăçĕсене тăвассинчен пăрăнма никам та пултараймаст.

Çак положенирен ăрасна пулни, гражданла пĕр обйазаннăça тепĕр обйазаннăçпа улăштармали условипе, кашни уйрăм хутрах халăх сучĕн решенийе тăрăх пулма пултарат.

7. Тĕнпе тупатăвасси йе приçагă парасси пăрахăçа тухат.

Кирлĕ чухне чаплă сăмах çеç параççĕ.

8 Граждански состойани актисене гражданла влаçсем анчах: мăшăрланнисене тата çуралнисене çырса пыракан пайсем туса тăраççĕ.

9. Шкула чиркӳрен уйăрас.

Государствăпа обшчествăлă вĕренту заведенийĕсенче пуринче те, çавăн пекех тата уйрăм çынсен вĕренту заведенийĕсенче, обшчеобразователнăй предметсене вĕрентекеннисенче, тĕн çинчен вĕрентме йурамаст.

Гражданĕсем частнăй майпа тĕн çинчен вĕрентме тата вĕренме пултараççĕ.

10. Чиркӳ тата тĕн организацийĕсем частнăй обшчествăсемпе сойузсем çинчен кăларнă петĕмешлĕ положенисене пăхăнса тăраççĕ, нимĕнле малараха хунисемпе те усă курмаççĕ, вырăнсенчи автономлă тата хăйсем тĕллĕн тытăнса тăракан установленисенчен субсиди илмеççĕ.

11. Чиркӳн тата тĕнсен обшчествисене валĝи пуçтарусемпе обложенисене ирĕксĕрлесе шыраса илме йурамаст, çавăн пекех вĕсем хăйсен членĕсене ирĕксĕрлени йе наказани пани пулмала мар.

12. Чиркӳпе тĕнсен нимĕнле обшчествин те харпăрлăх тытма права çук.

Вĕсен йуридически лицо прави çук.

13. Российăри мĕн пур чиркӳ тата тĕн обшчествисен пурлăхĕ халăхăн пурлăхĕ пулат.

Кĕлтума кирлĕ çуртсемпе йапаласене, государствăн вырăнти йе центрти влаçĕсем уйрăмăн йышăннă постановленисем тăрăх, тĕн обшчествисене тӳлевсĕр усă курма параççĕ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ

В. И. Улĝйанов (Ленин).

СОЦИАЛИСĂМ ТАТА ТĔН

В. И. ЛЕНИН

Ку чухнехи обшчествă пĕтĕмпех халăхăн пите те пĕчĕк пайĕ, çĕрхуçисемпе капиталиссен класĕсем, пысăк йышлă рабочи класа експлоатацилени çинче йĕркеленсе тăрат. Ку обшчествă—чуралăх обшчестви, мĕншĕн тесен „ирĕклĕ“ рабочисен, ĕмĕрĕпех капитал валĝи ĕçлекенсен, капиталисăмлă чуралăха мĕн кирлине парса тăрса ăна ĕмĕрлĕхе хăварма услам туса кăларакан чурасене усрама кирлĕ пурнăç хатĕрĕсене çеç илме „права“ пур.

Рабочисене економикă йеппе пусмăрласа тăни пурпĕр тĕрлĕ тĕслĕ политикăлă пусмăр, социаллă мĕскĕнлĕх, массăсен ăспуçпа ăсхапăллă пурнăçне ãискерлетсе тата тĕттĕмлетсе пырассине кăларса тата суратса тăрат. Рабочисем хăйсене економикă тĕлĕшĕпе ирĕке кăларассишĕн (кĕрешме) мĕн чухлĕ те пулин политикăла ирĕклĕх кĕрешсе илме пулăрĕç, анчах капитал влаçне сирпĕтсе антариччен вĕсене нимĕнле ирĕклĕх те кĕлмĕçлĕхрен, безработицăран тата пусмăртан хăтарас çук. Тĕн пур çĕрте те халăх массисем çинче,—ĕмĕр ыттисемшĕн ĕçленипе, нушапа тата пĕчченлĕхпе пусăрăнса ларнăскерсем çинче,—тăракан ăс-пуç пусмăрĕсенчен пĕри пулат. Тахçан-авалхи çынсем çутçанталăкпа кĕрешсе вăйсăр пулни турăсене, усалсене тĕлĕнмеле хăватсене т. ыт. çавнашкаллисене ĕненессине кăларса тăнă пекех, експлуатациленекен классем експлуататорсемпе кĕрешсе вăйсăр пулни леш тĕнчери лайăх пурнăçа ĕненессине иртеймн кăларса тăрат. Ĕмĕрĕпех ĕçлесе нуша курса пурăнакансене тĕн пĕлĕт çинче ырлăх пуласcине йăпатса, çĕрçинче йăваш та тӳсĕмлĕ пулма вĕрентет. Сын вăйĕпе пурăнакансене вара тĕн çĕр çинче ырă йатлă пулса пурăнма вĕрентет, çапла вара вĕсен пĕтĕм експлоататăрла пурнăçне çăмăллăнах тӳрре кăлармали май сĕнет тата пĕлĕт çинчи ырлăха лекмели билетсене килĕшӳлĕ хакпа сутат. Тĕн халăха апра-сухраца йаракан опиум пулат. Тĕн—ăсран кăларакан наркăмăш йышши йапала, капитал чурисем çавăн ăшне хăйсен етем сăнне, мĕн чухлĕ те пулин етеме тивĕç пурнăç тăвас требованийĕсене путараççĕ.

Анчах хăйĕн чуралăхне ăнланса илнĕ тата хăйне ирĕке кăларассишĕн кĕрешӳве çĕкленнĕ чура, çурри чура пулма пăрахат ĕнтĕ. Шултра фабрикăлă промышленнăç вĕрентсе çитĕнтернĕ, хула пурăнăçĕ çутта кăларнă ку чухнехи ăстанлă рабочи хăйне валĝи çĕр çинче лайăх пурнăç кĕрешсе илсе, хăйĕнчен тĕн тĕшмĕшĕсене йĕрĕнсе ывăтса йарат, пĕлĕте пупсемпе буржуалă ханжасен аллине парат. Кучухнехи пролетариат социалисăм йеппе тăрат, социалисăм тĕн тĕтрипе кĕрешме ăслăлăха йавăстарат тата рабочийе çĕр çинчи лайăх пурнăçшăн чăнласа кĕрешме пĕтĕçтернипе ăна леш тĕнчене ĕненесрен хăтарат.

Тĕн хархам хăй ĕçĕ пулмала—социалиссем тĕн çине мĕнле пăхнине йалан пекех çав сăмахсемпе палăртса калама хăнахнă. Анчах çав сăмахсем нимĕнле тӳнтер шухăш та кӳме ан пултарччăр тесен, вĕсен пĕлтерĕшне тĕп-тĕрĕс палăртса хумала. Тĕн патшалăх тĕлĕшпе хархам хăй ĕçĕ пулмала, тесе çине тăратпăр епĕр, анчах пирĕн хамăрăн парти тĕлĕшпе тĕне нийепле те хархам хăй ĕçĕ тесе шутлама пултараймастпăр. Патшалăхăн тĕнпе ĕç пулмала мар, тĕн обшчествисем патшалăх влаçĕпе çыхăнса тăни пулмала мар. Кашни кирек те мĕнле тĕне тытма йе нимĕнле тĕне те йышăнмасăр пурăнма, урăхла каласан, кашни социалис атеис пулнă* пек, атеис пулма пачах ирĕклĕ пулмала. Гражданĕсем хушшинче вĕсем мĕнле тĕне ĕненнине кура права тĕлĕшпе нимĕнле уйрăмлăх та пулмала мар. Официаллă документсенче гражданĕсем пĕр-пĕр тĕне тытни çинчен кирек мĕнле асăннине те, пĕр сăмахсăр, пĕтерсе лартмала. Патшалăх чиркӳне нимĕн пани те, чиркӳ обшчествисемпе тĕн обшчествисене нимĕнле патшалăх укçи пани те пулмала мар, çав обшчествăсем пĕр шухăшлă гражданĕсен пачах ирĕклĕ, влаçран килмен сойузĕсем пулса тăмала. Çав требованисене вĕçне çити пурнăçа кӳртни кăна иртнĕ вăхăтран йулса пыракан ирсĕр те ылханлă йапаласене—чиркӳ патшалăха крепăсла пăхăнса тăнине, вырăс гражданĕсем вара патшалăх чиркӳне крепăсла пăхăнса тăнине, ĕненнĕшĕн йе ĕненменнĕшĕн хĕсĕрленĕ, етем совĕçне пусмăрланă, хысна вырăнĕсемпе хысна дохочĕсене пĕр-пĕр патшалăх-чиркӳ наркăмăшне валеçсе парассипе çыхăнтарнă вăтам ĕмĕрти инквизитăрла саккунсене (вĕсем пирĕн уголовлă уложенисемпе уставсенче халиччене тăрса йулаççĕ) пĕтерсе хума пултарĕ. Чиркӳве патшалăхран йăлтах уйăрмала—акă ĕнтĕ социалисăмлă пролетариат кучухнехи патшалăхпа кучухнехи чиркӳ умне кăларса лартакан требовани.

Вырăс революцийĕ çав требованийе, политикăлă ирĕклĕхĕн уйăрлми кирлĕ пайĕ пулса тăракансkере, пурнăçа кӳртмеле. Вырăс революцийĕ ку тĕлĕшпе уйрăмах аван условисенче тăрат, мĕншĕн тесен политикă тĕлĕшпе крепăслă самодержавин ирсĕр казенщини духовенствă хушшинче те кăмăлсăрлăх, пăтрану тата тарăху кăларса йачĕ. Вырăс православилĕ духовенстви тем пекех мĕскĕн, тем пекех тĕттĕм пулин те Русçри кивĕ, вăтам ĕмĕр йĕрки аслатилĕ кĕрĕслетсе персе анни халĕ ăна та вăратрĕ. Вăл та ĕнтĕ ирĕклĕх ыйтасси çумне хутшăнат, казенщинăпа чиновниклĕ чăрсăрлăха хирĕç, „турă служителĕсене“ полицилĕ йĕрлев ĕçне вăйпа тутарнине хирĕç протеслет. Епĕр, социалиссем, духовенствă хушшинчи тӳрĕ те таса кăмăллă çынсен требованийĕсене вĕçне çитерсе, вĕсене ирĕклĕх çинчен сăвар уçса каланă сăмахсем çинче тытса, вĕсене тĕнпе полици хушшинчи кирек мĕнле çыхăнува та татăклăн пĕтерсе лартма хушса, çав йухăма пулăшса тăмала. Йе есĕр таса кăмăллă, сирĕн вара чиркӳве патшалăхран тата шкула чиркӳрен йăлтах уйăрассишĕн, тĕне пĕтĕмпех те пĕр сăмахсăр хархам хăй ĕçĕ туса хурассишĕн тăмала. Йе есĕр çав вĕçне çити ирĕклĕх требованийĕсене йышăнмастăр пулсан,—апла еппин, есĕр халĕ те инквизици йăлисен тыткăнĕнче тăратăр, апла еппин, есĕр халĕ те хысна вырăнĕсемпе хысна дохочĕсем çумне йăпшăнатăр, апла еппин есĕр хăвăрăн духовнăй хĕçпăшал вăйне ĕненместĕр, есĕр патшалăх влаçĕнчен çаплах вçаткăсем илме пăрахмастăр,—апла сире хирĕç пĕтĕм Российăри ăстанлă рабочисем пĕр хĕрхенӳсĕр вăрçă пуçласа йараççĕ.

Социалисăмлă пролетариат партийĕ тĕлĕшпе тĕн хархам хăй ĕçĕ мар. Пирĕн парти рабочи класа ирĕке кăларассишĕн ăстанлă, малта тăрса кĕрешекенсен сойузĕ пулат. Çавăн пек сойуз ăстансăрлăх, тĕттĕмлĕх çине йе тĕне ĕненни пек тĕшмĕшлĕхе хӳтĕлени çине сӳрĕккĕн пăхма пултараймаст. пăхмала та мар. Тĕн тĕтрипе пĕр идейăлă хĕçпăшалпа, идейăлă хĕçпăшалпа кăна, хамăрăн прессăпа, хамăрăн сăмахпа кĕрешме епĕр чиркӳве патшалăхран йăлтах уйăрас требовани лартатпăр. Анчах епĕр, ыттисенчен пусне, шăпах рабочисене тĕнпе тĕрлĕрен анкă-минкĕленнине хирĕç çавăн пек кĕрешме сойуз, Р. С.-Д. Р. П. туса хутăмăр. Пирĕншĕн ĕнтĕ идейăлă кĕрешӳ хархам хăй ĕç мар, пĕтĕм парти, пролетари ĕçĕ пулат.

Апла пулсан, мĕншĕн епĕр хамăра хамăрăн программăра атеиссем теместпĕр? Мĕншĕн епĕр христиансене тата турра ĕненекенсене пирĕн партийе кĕме чармастпăр?

Çав ыйту çине ответ пани тĕн ыйтуне буржуалă-демократилĕ лартнипе, социал-демократилĕ лартни хушшинчи пит те паха уйрăмлăха ăнлантарса памала.

Пирĕн программă пĕтĕмпех тĕнчене ăслăлăхла тата, çав хушăрах, шăпах материалисăмла ăнланни çинче йĕркеленсе тăрат. Çавăнпа та пирĕн программăна ăнлантарса парасси тĕн тĕтрин историлĕ тата економикăлă чăн тымарĕсене пурпĕр ăнлантарса парассине те пĕлтерет. Пирĕн пропагандăна пурпĕр атеисăма пропагандăласси те кĕрет, самодержавлăкрепăслă патшалăх влаçĕ халиччен кăлармa хытă чарса тăнă тата хĕсĕрленĕ тивĕçлĕ ăслăлăх литературине кăларасси халĕ пирĕн парти ĕçĕн пĕр пайĕ пулса тăмала. Пирĕн халĕ пĕреччен Енгелĝс нимĕç социалисĕсене панă канаш тăрăх ĕçлеме тивет пулмала: французсен XVIII ĕмĕрти çутта кăларакан тата атеисла литературине куçарса массăлăн сармала.

Анчах епĕр çав хушăрах тĕн ыйтуне, буржуазни хушшинчи радикаллă демократсем час-часах лартнă пек, „ăсхакăлтан“ килет тесе, клас кĕрешӳвĕпе çыхăнтармасăр, абстрактлă, идеалисла лартас çул çине тем пулсан та пăрăнса каймала мар. Рабочи массисене вĕçĕмсĕр пусмăрласа тăнипе вĕсене тĕттĕмлетсе пыни çинче тытăнса тăракан обшчествăра, тĕн тĕшмĕшĕсене проповĕд тунипе кăна сирсе йама пулат, тесе шухăшлани кировсĕр пулнă пулĕччĕ. Тĕн етемлĕхе пусмăрлани обшчествăри економикăлă пусмăрăн продуктипе ӳкерчĕкĕ çеç пулнине манса кайни буржуалла чикĕленсе ларни пулнă пулĕччĕ. Пролетариата вăл хăй капиталисăмăн хура вăйĕсене хирĕç кĕрешни çутта кăлармасан, ăна нимĕнле кĕнекесемпе те тата нимĕнле проповĕдпе те çутта кăларма çук. Пусмăрти клас çĕр çинче рай тăвассишĕн пĕр пулса чăн-чăн революцилĕ кĕрешни пирĕншĕн, пролетарисем пĕлĕт çинчи рай пирки пĕр пек шухăшланинчен пахарах.

Акă мĕншĕн епĕр хамăрăн программăра хамăрăн атеисăм çинчен каламастпăр, калама кирлĕ те мар; акă мĕншĕн епĕр пĕр-пĕр кивĕ тĕшмĕш йулашкисене пăрахман пролетарисене пирĕн партипе çывхарма чармастпăр, чарма та кирлĕ мар. Тĕнче çинчен ăслăлăх вĕрентнĕ пек йаланах вĕрентсе пырăпăр епĕр, мĕнле те пулин „христиансем“ вĕçне çити пымаппине хирĕç кĕрешни пирĕншĕн кирлĕ, анчах вăл тĕн ыйтуне тивĕç мар пĕрремĕш вырăна лартма кирлине пĕртте пĕлтермест, вăл виççĕмĕш вырăнта тăракан шухăйсемшĕн йе ашшусемшĕн кирек мĕнле политикăлă пĕлтерĕшне те хăвăрт сухатаканскерсемшĕн, економикăлă аталану хăйех ăнтăр-каптăр валĝи аладовойа хăвăрт тухса перекенскерсемшĕн, чăн-чăн революцилĕ, економикăлă тата политикăла вăйсене ваклантарса йама кирлине пĕлтермест.

Реакцилĕ буржуази массăсен тимлĕхне политикăла економикăлă чăн-чăн паха та тĕп ыйтувĕсенчен, халĕ хăйĕн революцилĕ кĕрешӳвĕнче ĕçре пĕрлешсе пыракан пĕтĕм Российă пролетариачĕ татса паракан скерсенчен, тĕн хирĕçӳ йеннеле сулса йарас тесе, пур çĕрте те тĕп хирĕçӳне чĕртсе йама тăрăшнă, халĕ пирĕн нартăрта та тăрăшма пуçлат. Çав пролетарилĕ вăйсене ваклаcа пĕтерес реакцилĕ политикă, пайан, пуринчен ытла, черносотенла погромсенче палăраканскер, ыран, тен, мĕнле те пулин чеперех реформăсем шухăшласа кăларас патне çитĕ. Кирек мĕнле пулсан та, епĕр ăна хирĕç пролетарилĕ пĕр шухăшлăх çинчен тата тĕнчене ăслăлăх вĕрентнĕ пек ăнлаласси çинчен вĕрентекен лăпкă, тĕрĕс тата чăтăмлă проповĕде, иккĕмĕш вырăнта тăракан кирек мĕнле хирĕçӳве те йут ĕç вырăнне хураканскере, туса пырăпăр.

Революцилĕ пролетариат тĕне патшалăхшăн чăн-чăнах хархам хăй ĕçĕ пулса тăмала тăвĕ. Çав, вăтам ĕмĕр кăмăскинчен тасатнă политикăлă стройра, пролетариат економикăлă чуралăха, етемлĕхе тĕнпе анкă-минкĕлетессине кăларса тăракан чăн çăлкуçа, пĕтерсе лартассишĕн анлăн та уççăн кĕрешсе пырĕ.

* Атеисăм—турра ĕненменни. Атеис —турра ĕненмен çын.

Сочиненисем, VIII т. 419—423.стр. 1905 ç. декабĕр.

Румынири политикăла кризис

Румынири политикăла кризис кашни кунах тарăнланса пырат. Декабĕрĕн 20-мĕшĕнче пулнă парламент суйлавĕнче суйланмасăр йулнă Татарескун реакцилĕ кабинетне Гоган фашисла правителствипе улăштарни кризиса тата ытларах сивĕчлетрĕ.

Румынин политикăла лару-тăрувĕ шутсăр йăвăр. Економикăлă кризис хупăрласа килнĕ чухне политикăлă сивĕч кĕрешӳ вăйланса пырат.

Халĝхи „аслă Румыни“—вăл çамрăк, анчах сывă мар государствă. Вăл пĕтĕм империалисăмла системă ишĕлсе пынă тапхăрта çуралнă государствă. Халĝхи Румыни государстви пулсан, тепĕр кунех Румыни çумне „пĕрлештернĕ“ облăçсемпе „метрополи“ хушшинче нацилĕ тата економикăлă хирĕçӳсем вăйлăн пуçланса кайнă. Империалисăмла вăрçă иртнĕ хыççăн, çак хирĕçӳсем Румыни государствин ахалĝ те чирлĕ организмĕпе тата ытларах хавшатса çитерне.

Румыни промышленнăçĕ малала каймаст, производствă чакат. ĕççĕр тăрса йулнисем нумайланаççĕ. 1937 çулта çеç нефт промышленнăç производстви 19 процент чакнă. Пир-авăр тĕртекен промышленнăç предприйатисем нумайĕшĕ çинере те 4—5 сехет çеç ĕçлеççĕ. Чылай фабриксене („Черкез“, „Рекорд“ тата ыттисене) хупса лартнă. Промышленнăçăн ытти пайĕсенче те ĕç çакăн пекех начар тăрат.

Ĕçукçи пĕрмайах чакса пынă. кулленкирлĕ таварсен хакĕ ӳссе пынă пирки рабочисем тавар сахал илекен пулнă, хресченсен пурнăçĕ те унтан лайăх мар, вĕсем те пите начар пурăнаççĕ.

Румынири йалхуçалăхĕн, Ивропăра чи кайа йулнăскерĕн, лупăшĕ пите сахал. Румыни економисĕ Гулей темиçе уйезри 12 йалти хресченсен пурнăçĕсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн, çапла çырат: „Пĕтĕм хуçалăхсенчен 80 проценчĕ нимĕн чухлĕ те тупăш памаст, хăйсен çемйисене тăрантарса усрама пултараймаççĕ“. Румынин тепĕр економисĕ Корнацан çырса пĕлтернĕ тăрăх, хресченсем улпутсене парăма кĕнĕшĕн хресчен хуçалăхĕн пĕтĕм тупăшĕсенчен 45 процентне тӳлеççĕ. Кун çумне ытти парăмсене хушсан, хресчен хуçалăхĕн пĕтĕм тупăшĕсенчен 55 проценчĕ парăм тӳлеме кайат.

Çакна пула Румыни хресченĕсем йулашки çулсенче промышленнăç таварĕсене пите сахал илекен пулнă. Налогсем ӳсни çеç мар, йалхуçалăх таварĕсемпе промышленнăç таварĕсен хакĕ хушшинче пысăк уйрăмлăх пурри те хресченсене чухăнлатса пырат.

Йалхуçалăх тата промышленнăç продукцисен хакĕ.

Çулсем	й-х продукцийĕ	пром. продук.
1929 ç.	100	100
1930 ç.	62,8	93.2
1933 ç.	44.9	69.0
1936 ç.	54,0	102.9
1937 ç.	61,4	104.4

Налогсем çинчен калас пулсан, кашни хресчен пуçне çакăн чухлĕ налог тивнĕ:

	1933 ç.	1937-38 ç.
Государствă налогĕ	56 лей	84 лей
Коммуналĝнăй налог	66 лей	126 лей
Çулйĕр налогĕ	31 лей	47 лей
Ытти налогсем	16 лей	156 лей
	169	411

Çаксем пурте Румынири хресченсене чухăнлатнă. Хресчен чухăн пулни сутуилӳ тата промышленнăç ĕçне те вăйсăрлатмасăр тăма пултарайман. Таварсем каймаççĕ. Таварсем пĕтеççĕ. Чухăна тухнă, тавар илме пултарайман хулари тата йалти халăхсем выçă лараççĕ. Румынин статистикă управленин сведенийĕ тăрăх: налогсемпе парăмсене тӳлеменнишĕн 1932 çулта 1.322 хуçалăхăн пурлăхне сутса пĕтернĕ, 1936 çулта 5.997 хуçалăхăнне сутнă. Халĕ пушшех нумай сутаççĕ.

Бессарабири ĕççынниcен пурнăçĕ уйрăмах йăвăр. Румыни тытса илнĕ çак территорине нимĕн йĕркесĕр експлоатацилет, çавна пула Бессарабире кашни 4 çулта пĕрре выçлăх çулĕ пулат. Тырă пулнă çулта хресченсем хăйсен продукцине нисçта сутаймасăр аптăраççĕ. Налогсемпе парăмсене тӳлеменнишĕн темиçе пин хуçалăхăн пурлăхĕсене сутса пĕтереççĕ.

Рабочисемпе ĕçхресченĕсен пурнăçĕ чăтма çук йăвăр. Ĕççыннисем хушшинче фашисла режим çине тарăхни ӳсет. Румыни çумне „çыпăçтарнă“ облăçсенче администрацивлă аппарат (полици, жандармери, суд тата ыттисем те) нимĕн йĕркесĕр иртĕнсе кайнă. Административлă аппаратра ĕçлекенсем çӳлтен пуçласа вырăнсене çитичченех каснана çаратаççĕ, вçаткă илеççĕ. Шкулсемпе болĝницăсем тăвас вырăнне чиркӳсемпе хупахсем тăваççĕ. 1934 çулта 43 шкул тунă, çĕнĕрен 536 чиркӳ тунă. Çак вăхăтрах Румынире шкул çулне çитнĕ ачасенчен çурри вĕренмеççĕ, çĕршывра туберкулĝоз чирĕпе чирленисем 800 пин çын, ачасем шутсăр нумай вилсе пĕтеççĕ. Кашни çул 600 пин çуралаççĕ пулсан, унтан 120 пин вилет.

Вак нацисен пурнăçĕ уйрăмах йывăр. Румынире пуç пулса тăракан буржуази „пирĕн çĕршывра нимĕнле наци ыйтăвĕ те çук“ тесе калама хăтланат. Çак вăхăтра çĕршывра Румын мар халăхсем 40 процент ытла, венгерсем 2 мĕлйун, украинецсем 1 мĕлйун, молдавансем 1.5 мĕлйун, вырăссем 500 пин, нимĕçсем 800 пин, йеврейсем 800 пин тата ыттисем те пур. Çак халăхсене „румынизацилени“, румын мар халăхсен прависене пĕтерсе пыни—румын мар халăхсемпе „таса румын“ хушсем хушшинчи хирĕçӳсене питĕ çивĕчлетсе йанă.

Пилĕк çул хушши ĕнтĕ Румынире вăрçă чухнехи пек йĕркене улăштармаççĕ. Государствă пуçĕнче тăракан реакцилĕ классем хăйсен режимне фашисла диктатурă тунипе çăлса хăварма хăтланаççĕ. вĕсем февралĝте пулса иртнĕ парламент суйлавĕнче халăх фашисăма хирĕç сасăланине те шута илмеççĕ.

Тĕнчери хаçат-журналсем пурте Гоган фашисла правителстви влаçа илни Румынин ахалĝ те йăвăр лару-тăруне çĕршывра та, урăхçĕршывсемпе хутшăнас ĕçре те тата ытларах йăвăрлатни çинчен çырса пĕлтереççĕ. Шалти хирĕçӳсемпе политикăлă кĕрешӳсем тата ытларах çивĕчленсе карĕç. Фашисла режим урăхçĕршывсемпе хутшăнас ĕçри Румынин лару-тăруне нихăçанхинчен ытларах йăвăрлатрĕ. Румынире фашисла переворот тунине Германипе Италире çеç хавасла йышăнса илнĕ.

Халĕ Румынире румын мар халăхсене çав тери тискеррĕн пусмăрлаççĕ. Правителствă фашисла режимпа килĕшмен çынсене пĕтермели май тăвасшăн тăрăшат. Буржуалă-демократилĕ хаçатсене („Адеверул“, „Димипеаца“, „Лупта“) хупнă та ĕнтĕ. Румын мар халăхсен ахалĝ те пĕчĕк прависем çине çĕнĕрен тапăнса пыраççĕ. Çĕнĕ саккун тăрăх, Бессарабири вырăс чĕлхипе тухса тăракан пур хаçатсене те кăларма чарнă.

Гога правителстви Румынири демократин йулашки сыпăкне—парламента та пĕтерсе хурасшăн. 1937 çулти декабĕрĕн 20-мĕшĕнче суйалнă, анчах пĕрре пухăнса лару туман парламента „çĕршывра политикăлă лару-тăру тума пултарайман“ сăлтавпа салатса та йанă. Парламентăн çĕнĕ суйлавне çак çулта мартăн 2-мĕшĕнче иртермеле тунă. Парламента йăлтах салатса йама фашиссен халлĕхе хăйулăх çитеймест. Анчах та, правителствă пуçлăхĕ Гога „çĕнĕ парламент оппозици шухăшне итлеме çеç пуçтарăнат, саккун кăларма пуçтарăнмаст“ тесе каланă.

Тĕрĕссипе илсен, Румынире фашисла режим туса хунă.

Румыни правителстви пуçĕнче тăракан етемсем хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр нефт, тырă, аш-какай, вăрман нумай тытакан Румынийе Гитлерла Германипе фашисла Италин колонийĕ туса хума тăрăшаççĕ. Румынин тулти политикинче улшăну пулни Балканра вăрçă хăрушлăхĕ вăйланнине пĕлтерет.

Румынири ĕçсене çак çулпа йарассинче фашисла агрессорсене хирĕç татăклă майсем йышăнайман франци политики сахал мар пулăшнине палăртмасăр хăварма май çук. Çак политикă Балканри государствăсенчĕ буржуалă-демократилĕ державăсем Ивропăн Кăнтăрпа Хĕвелтухăç пайĕсенче мирлĕ самана тума пултарасси пирки пысăк иккеленӳ шанчăксăрлăх кăларса тăратрĕ.

Анчах та, паллах ĕнтĕ. Ивропăн Кăнтăрпа Хĕвелтухăç пайĕнчи мирлĕ саманана пăсни чи малтан Румынишĕн хăйшĕн пите хăрушă пулат.

С. Петрович. („Правда“).

Çĕрĕç оргăнĕсем манса хăварнă ĕç

Социалисăмла йалхуçалăхĕ çултан çул ытларах та ытларах механизациленсе пырат. Иртнĕ çул колхозсен уй-хирĕсенче 1021 трактор, 108 комбайн ĕçленĕ. Лашапа ĕçлемели плугсем колхозсенче 134 пин, сейăлкăсем 3,8 пин шутланаç çĕ. Паллах, вĕсене, иртнĕ çулта ĕçре пулнăскерсене, чылайĕшне йусамала, ваннă пайĕсене çĕнĕрен илсе лартмала.

Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн машина-техникă пайĕнче ĕçлекенсем тата хăшпĕр МТС директорĕсем лăпланса ларнă пирки, тракторсене йусас ĕç пит кайа йулчĕ. Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ хăйсен постановленийĕнче тракторсене йусас ĕçе хăвăртлатма кирли çинчен уйрăмăнах кăтартса панă хыççăн çеç çав ĕçре йулашки вăхăтра улшăну пурри палăрат. Февралĕн 1-мĕçне тракторсене тĕпрен йусамали плана 61,4 процент, вăтам йусав йенĕпе—56,3 процент тултарнă.

Тракторсене йусас ĕç çапла пырат пулсан, тракторпа ĕçлемели машинăсене—плугсемпе çейăлкăсене йусас ĕç пачах çителĕксĕр пырат вара. Февралĕн 1-мĕшне плугсене йусамали плана 43,3 процент, сейăлкăсене йусамали плана 29,0 процент çеç тултарнă. МТС директорĕсем умĕнче тăракан задачă вăл—тракторсене йусас ĕçе хăвăртлатассипе пĕрлех тракторсемпе ĕçлемели машинăсене йусас ĕçе те хăвăртлатасси пулса тăрат.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тата райĕçтăвкомсемпе çĕрĕç оргăнĕсем ку таранччен тракторсене йусас ĕç çинчен çеç калаçнă, колхозсенчи машинăсене йусас ĕç çине пачах та çавăрăнса пăхман. Çавăнпа та колхозсенче çуракине тухиччен плугсене, сейăлкăсене тата ытти ĕçхатĕрсене йусас ĕç пит йапăх пырат.

Ку вăл колхоз руководителĕсемпе бригадирсенчен те килет. Йĕпреç районĕнчи Аслă Упакасси колхозĕнче тата Вăрмар районĕнчи „Трактор" колхозра кĕраки хыççăн плугсене халиччĕнех уйра йур айĕнче лартнăшăн, паллах, чи малтанах колхоз правленийĕпе бригадирсем айăплă пулаççĕ. Елĕк районĕнчи Молотов йачĕпе тăракан колхозра та плугсем йур айне пулса тăпра çумне шăнса ларнă. „Вĕсене хаљ шыраса тупма та, йур ирĕлсе пĕтмесĕр кăларма та çук," тесе пĕлтерет йалкор К. Ку ĕнтĕ çак колхоз руководителĕсем çуракине хатĕрленме тăрăшманни çинчен çеç мар, социалисăмла пурлăха сыхлама тăрăшманни çинчен те уççăн кăтартса парат.

Елĕк районĕнче ытти колхозсенче те машинăсене йусас ĕçе кирлĕ пек тытăнман. „Сунтал" колхоз плугсемпе сӳресене йусас ĕçе çеç мар, çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тумали ытти ĕçсене те тытăнман.

Колхозсенче машинăсене йусас ĕçре ытти районсенче те кирлĕ пек йертсе пыни çук. Патăрйел районĕнчи „Красноармеец" колхозра, Канаш районĕнчи „Хĕрлĕ хĕм" колхозра, Тутаркас районĕнчи Шмидт йачĕпе тăракан колхозра плугсемпе çейăлкăсене пăхса усрас ĕçре нимĕнле йĕркелĕх те çук.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн машинă-техникă пайĕнче ĕçлекенсем колхозсенчи машинăсене, плугсемпе сӳресене тата çейăлкăсене йусас ĕçе йертсе пырасси вăл пирĕн ĕç мар, теççĕ. Çавăн пекех районри çĕрĕç пайĕсем те çак ĕç çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмаççĕ. Малашне те ку ĕç çавăн пек пырсан, чылай колхозсенче çураки ĕçĕ чăрăнса тăма пултарат. Çĕрĕç оргăнĕсен колхозсенчи машинăсене йусас ĕçе халех хутшăнмала, çав ĕçшĕн колхоз руководителĕсемпе бригадирсен хăйсен ответлăхне туймала.

ЙУЛСА ПЫРАКАНСЕНЕ ПУЛĂШНИ КИРЛĔ

Иртнĕ çулта Вăрнар районĕнче 85 колхозран 30 колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 100 пăт тĕштырă туса илнĕ пулсан, кăçал кашни колхоз гектартан 100 пăтран кайа мар илессишĕн кĕрешет.

Чылай колхозсенче партипе правителствă çуракине хатĕрленесси çинчен йышăннă постановленисене сӳтсе йавнă хыççăн, çуракине хатĕрленес ĕçе тĕпренех çĕнетрĕç. Çав тĕлĕшпе хаљхи вăхăтра хĕрсех вăрлăхсене суртлаççĕ. Вăрлăх туса илмели вырăнсене акма пĕрчĕн-пĕрчĕн суйласа тасатаççĕ. Машинăсене йусаççĕ, хире минераллă имçамсем кăлараççĕ.

Коњцовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхоз пайанхи кун 5000 лав ытла тислĕк, 10.000 лав торф уйа кăларнă, 100 центнер кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Вăрлăхсене тасатса, йалхуçалăх машинисене йусаса пĕтернĕ. Колхозниксем агротехникăна вĕренеççĕ. Коњухсем ĕç лашисене лайăх пăхаççĕ. Колхоз кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 200 пăт тĕштырă илес тĕлĕшпе Зеленовкăри Ленин йачĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлет.

Зеленовкăри Ленин йачĕпе тăракан колхоз та çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе Сталин йачĕпе тăракан колхозран йулмаст. Вăрлăхсене кĕске вăхăт хушшинче суртласа пĕтерес тĕлĕшпе 2 сменăпа ĕçлеççĕ. Гусихина, Кондратйева, Кисељова, Храмкина колхозницăсем вăрлăх тасатнă çĕрте ĕç нормисене 150—175 процент таран тултарса пыраççĕ.

Çĕнйал Нурăсри „Правда" колхоз иртнĕ çулта кашни гектартан вăтам шутпа 130 пăт тĕштырă туса илчĕ. Халĕ те колхоз иртнĕ çулта тунă çитĕвӳсемпе лăпланса лармаст, февралĕн пĕрремĕшне вăрлăхсене суртласа пĕтернĕ. Йалхуçалăх машинисене йусанă. Уйа 1000 лава йахăн тислĕк кăларнă. 25 центнер кĕл, 19 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Кăçал вĕсем гектартан 150 пăт тырă илессишĕн кĕрешеççĕ.

Хирпуçĕнчи „Çĕнтерӳ" колхозла Рунгăри „Кĕçĕн Çавал" колхозсем социалисăмла ăмăртува тухрĕç. „Çĕнтерӳ" колхоз февралĕн 2-мĕш тĕлне уйа 4050 лав тислĕк, 9579 лав пĕве йушкăнĕ кăларнă, 19 центнер кĕл пухнă. Вăрлăхсене тасатса, йалхуçалăх машинисене йусаса хунă. Халĕ сăнав участкисем çине акма вăрлăха алăпа суйлаççĕ.

Çуракине лайăх хатĕрленекен колхозсем татах та пур, анчах чылай колхоз правленийĕсем тата йалсовечĕсем çуракине хатĕрленессипе начар ĕçлесе пыраççĕ. Кунта чи малтанах Мăн Турханти Ленин йачĕпе тăракан колхоз çинчен каламала. Вăл колхоз вăрлăхсене тасатман, йалхуçалăх машинисене те йусаман. Уйа тислĕк те, пĕве йушкăнĕ те кăларман.

Çуракине „Шурăмпуç", Уйкас Йавăшри Прамнек йачĕпе тăракан колхозсем те начар хатĕрленсе пыраççĕ.

Çуракине хатĕрленес çĕрте колхозсене райçĕрĕç пайĕпе МТСтанци те оперативлă йертсе пымаççĕ. Трийерсене йĕркелĕ ĕçлеттермесçĕ. Районра 38 трийертан 30 трийер çеç ĕçлет. Чылай колхозсенче вăрлăхсене тасатма (Кивйахакасси, Кĕçĕн Кипек) пĕр сменăпа çеç ĕçлеççĕ. Çавăнпа та график пурнăçа кĕмест. График тăрăх районăн йанварĕн 30-мĕш тĕлне 20 250 центнер вăрлăх тасатмала пулнă пулсан, 19.970 центнер анчах тасатнă.

Район хире тислĕк, торф кăларас плансене пурнăçлас тĕлĕшпе те начар ĕçлесе пырат. Пайанхи куна çитсе хĕллехи вăхăтра тислĕк кăлармали плана 30 процента йахăн çеç тултарнă. Çавăн пекех кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, фекали пухас тĕлĕшпе те ĕç начар тăрат-ха.

Çураки çывхарса килет. Çуракине пур йенчен те хатĕрленнипе кĕтсе илмеле. Социалисăмла ăмăртува анлăн сарса йарса кайа йулнисен малта пыракансемпе танлашма тăрăшмала.

Ник. Козлов.

Вăрлăх пахалăхĕшĕн тăрăшмаççĕ

Трак районĕнчи колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç халĕ те ӳрĕк-сӳрĕккĕн пулса пырат. Район вăрлăх фончĕ хывас плана та тултарман. Уйрăмăнах техникăла културăсен вăрлăхĕсене хатĕрлес ĕç начар пулса пырат. Клевер вăрлăхĕ хатĕрлесе хурас плана 80 процент çеç тултарнă.

Районра вăрлăхсене суртласа пĕтернĕ шутланат. Анчах вăрлăхсене начар суртланă. Районри 99 колхозра вăрлăхсене анализ туса пăхнă хыççăн. 40 колхозра вăрлăхсене тепĕр хут суртлама кирли палăрнă.

Районĕпе 8394 плуг тата 99 çейăлкă йусамала пулсан, хаљхи вăхăта 1674 плуг тата 87 çейăлкă кăна йусанă. Çапла пулсан та райçĕрĕç пайĕ еведенисем ыйтса çеç ларат-ха.

„Çĕнĕ ĕç" тата „Красноармейец" колхозсем çуракине хатĕрленме тытăнмашшăн пĕрех. „Çĕнĕ ĕç" колхозра пĕр центнер вăрлăх та суртламан. Çавăн пекех уйа пĕр лав та тислĕк кăларман. Йалхуçалăх машинисене йусама тытăнман. Колхозăн ĕç лашисем ырхан. Ĕç хатĕрĕсем çитмесçĕ. Колхоз председателĕ Матвейев йулташ тăрăшса ĕçлес чухне йалта ĕçкĕ хыççăн сӳрет. „Красноармейец" колхозра та ĕçсем çавăн пекех, колхоз председателĕ Архипов йулташ пушă сăмахсем çапса çеç ларат.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тракsен татăклă улшăну тумала.

Петров.

Чăваш республикинчи МТС-сенче тракторсене тата тракторсемпе ĕçлемели йалхуçалăх машинисене хĕлле йусанине кăтартакан оперативлă сводкă

(Февралĕн 1-мĕшне)

МТС йачĕсем	Тĕпрен йусамалли: Çулталăкри план	Тĕпрен йусамалли: Йусанă (процентпа)	Вăтам йусамалли: Çулталăкри план	Вăтам йусамалли: Йусанă (процентпа)	Тракторпа ĕçлемели машинăсене йусанă: Плугсем: План	Плугсем: Йусанă (процентпа)	Акмалли машинăсем: План	Акмалли машинăсем: Йусанă (процентпа)
Улатăр	14	64,2	18	50,0	17	70,6	19	47,3
Елĕк	14	50,0	35	57,1	35	28,5	13	7,6
Патăрйел	21	67,0	36	50,0	44	29,5	8	—
Вăрнар	20	75,0	27	59,2	33	36,3	28	91,3
Йĕпреç	17	58,8	18	44,4	21	38,0	11	27,2
Ишлей	2	—	43	62,7	42	64,2	20	—
Канаш	10	60,0	15	—	32	37,5	7	71,4
Куславкка	—	—	42	88,0	42	90,4	10	90,0
Куванкка	28	60,8	34	47,0	43	32,5	15	—
Йелчĕк	30	73,3	32	56,2	53	56,6	16	—
Пăрачкав	27	48,0	26	21,2	53	—	22	—
Тутаркас	—	—	41	58,5	51	—	10	—
Трак	11	100,0	41	58,5	36	66,6	9	—
Вăрмар	24	41,6	29	58,6	49	59,1	20	—
Çĕрпӳ	22	54,5	32	56,2	41	24,4	10	90,0
Шупашкар	—	—	37	48,6	35	14,2	10	20,0
Шăхасан	22	50,0	23	108,7	41	85,3	10	—
Тăвай	10	100,0	32	59,3	45	67,0	15	86,6
Республика тăрăх	267	61,4	571	56,3	713	43,3	248	29,0

Канашри МТ Мастерскойĕнче 170 мотор йусанă.

Хĕрлĕ çарпа Тинĕс Çар Флочĕ 20 çул тултарнă йубилей умĕн

Пурте ăмăртăва хутшăннă

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ тата Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă уйава тивĕçлипе кĕтсе илес ĕçе Ашенбреннер йулташ йачĕпе тăракан Çуран çар училищинче вăйлăн туса пыраççĕ. Кашни бойец, курсант, командир Хĕрлĕ Çар тата Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă йачĕпе иртсе пыракан социалисăмла ăмăртăва хутшăнса обйазателствăсем илнĕ, договорсем тунă. Договорсем мĕнле пурнăçланса пынине кашни 10 кунрах тĕрĕслесе пыраççĕ. Договора лайăх пурнăçласа пыракансене стена хаçачĕсем çине çырса палăртаççĕ. Вĕренӳре кайа йулса пыракансене пулăшаççĕ.

Кашни подразделенинчех Ленин кĕтесĕсене Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн 20 çул хушшинчи ĕçĕсем çинчен кăтартакан илемлĕ картинăсемпе, портретсемпе капăрлатаççĕ.

Çак кунсенче уйав йачĕпе йĕлтĕрçĕсен похочĕ тата ăмăртăвĕ пулса иртрĕ. Бойецсем походра та, ăмăртура та хăйсем йĕлтĕрпе тарăн çырмасем урлă, чăнкă сăрт-тусем çинчен маттур çӳреме пултарнине кăтартрĕç.

Подразделенисенче аса-илӳ каçĕсем, калаçусем, лекцисем туса иртереççĕ. Вата командирсем империалисăмла вăрçăн, граждăн вăрçин уйрăм епизочĕсем çинчен курсантсене, красноармейецсене каласа пĕраççĕ.

Тĕрлĕ кружоксем çĕнĕ програмăсем хатĕрлеççĕ. Унта граждăн вăрçин епизочĕсем кĕреççĕ, уйрăмăнах Фурмановăн „Чапайев" произведенийĕ тăрăх Чапайевăн Сломихински патĕнче пулнă çапăçĕвĕ, Царицын хулине тăшмансенчен йепле сыхланин епизочĕсем пулаççĕ. Хор кружокĕ çĕнĕрен йурăсем вĕренет, физкултурă кружокĕ пирамидăсем, стойкăсем тума хатĕрленет.

Курсант П. Тарасов.

Аероклуб хатĕрленет

Шупашкарти Љапидевски йачĕпе тăракан аероклуб Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă уйава хатĕрленет.

Љотчиксемпе учљотсем тăван çĕршывăн йуратнă Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн йубилейне хатĕрленсе, хăйсем çине обйазателствăсем илеççĕ. Вĕсем аероклубăн улатăрти филиалне ăмăртăва чĕнеççĕ. Учљотсем хушшинче социалисăмла ăмăртăва пуçарса йарса, пур предметсемпе те „хорошо", „отлично" паллăсемпе вĕренме пулаççĕ. Аероклубăн йалан тухса тăракан „Крылатое племя" йатлă стена хаçатне икĕ хут пысăклатса, илемлетсе кăларма палăртнă. Кунсăр пуçне кашни учљотах йубилей тĕлне ГТО значокĕн хĕллехи нормине пама, ПВХО значокне илме пулаççĕ. Лайăх физкултурниксене, пăшалран лайăх тĕл перекенсене палăртассипе ăмăрту туса ирттереççĕ.

„Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарчĕ" темăпа витринă туса çакаççĕ. Февралĕн 23-мĕшĕнче аероклубра љотчиксен пысăк вечĕр пулат.

Февралĕн 2-мĕшĕнчен пуçласа кашни кунах Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар Флочĕн кĕрешĕвĕпе çĕнтерĕвĕсем çинчен калаçусем туса ирттереççĕ. Кунпа пĕрлех „совет авиацийĕн çĕнтерĕвĕ" темăпа хулари учрежденисемпе предприйатисенче докладсем туса параççĕ.

Аслăлăх библиотекине пулăшу кирлĕ

Чăваш АССР Аслăлăх библиотеки 1928 çулта организациленнĕ. Вунă çул хушшинче çак библиотекă ĕçхалăхне аслăлăха вĕрентес, Маркс—Енгељс—Ленин—Сталин вĕрентĕвĕсемпе хĕçпăшаллантарас çĕрте пысăк пулăшу парса пычĕ.

Библиотекă аслăлăх литературисене çулсерен нумайрах та нумайрах туйанса пырат. 1935 çулта библиотекăра 6000 кĕнеке пулнă пулсан, 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне 66.000 кĕнеке шутланат. Вăл шутран 600 екземпљар Ленинпа Сталин çырнă кĕнекесем.

Библиотекăна вулама пыракансен йышĕ те çулран çулах нумайланса пырат: 1935 çулта 5214 çын, 1936 çулта 11.721 çын, 1937 çулта 16.172 çын кĕнекесем илсе вуланă.

Анчах та ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ Аслăлăх библиотекин ĕçне тивĕçлĕ вырăна лартассине нимĕн те хакламаст.

Библиотекă пĕчĕк çурта вырнаçнă. Кĕнеке шкафĕсене лартма вырăн çук, вулама пыракансене ваљљи те вырăн çителĕксĕр.

Библиотекă директорĕ Трофимова йулташ Çутĕç Халăх Комиссарĕ Осипов й. патне библиотека ваљљи пысăкрах çурт туса май тупасси çинчен ыйтма пырсан, Осипов йулташ ăна сĕтел çине чышса кăшкарса тăкнă. 1938 çулта библиотекă ваљљи 69 пин тенкĕлĕх кĕнеке илме палăртнă, анчах Осипов й. 15 пин тенкĕлĕх çеç илмеле тунă.

Çавăн пекех Çутĕç Халăх Комиссариачĕ библиотекă ку ĕçе нимĕн те чухламан работниксем тупса йарат. Акă Беловăна илер. Белова библиотекă директорĕ пулса ĕçленĕ хушăра ĕçе кирлĕ пек йертсе пыман. Библиотекă ваљљи çĕнĕ литературăсем туйанман, ун вырăнне вăл троцкиссемпе буржуалă националиссен кĕнекисене тытса усранă. Кун пирки Белова çинчен сăмах хускатсан, Белова „чире" персе библиотекăран тухса шăвăннă.

Çавăн хыççăн Осипов йулташ Аслăлăх библиотекине директор вырăнне Петоккине лартат. Петокки, библиотекă ĕçне пачах та пĕлменскер, библиотекăна йертсе пыман, урăх ĕçпе муталанса ларнă.

Вăл библиотекăна кунне пĕр хут çеç пырса курнă.

Мана телефонпа чĕнмерĕç-и?—тенĕ те, каллех хăйĕн хватерне тухса кайнă.

Апла пулин те Петоккине Çутĕç Халăх Комиссариачĕ уйăхсерен 900 тенкĕ ĕçукçи парса тăнă.

Епĕр хамăр пĕлӳве хăпартасшăн. Вырăна тухса ытти республикăсенчи библиотекăсен ĕçĕсемпе паллашса, вĕсен кăтартулă ĕçĕсемпе, опычĕсемпе хамăр ĕçпе усă курасшăн. Анчах пирĕн шухăшсемпе ĕмĕтсем çине Çутĕç Халăх Комиссариачĕ алăпа çеç сулат. Епĕр пулăшу кĕтетпĕр,—тет Московскайа йулташ.

Епĕр Çутĕç Халăх Комиссариачĕ Аслăлăх библиотеки çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхасса шанатпăр. Аслăлăх библиотекине пулăшу кирлĕ, ăна укçа-тенкĕпе те, çирĕп кадрсемпе те пулăшмала.

Арк. Нестеров.

ВĂРМАН ХАТĔРЛЕВĔ

Шанчăкран тухнă директор

Нумай пулмаст Шăмăршă вăрманпромхоз директорĕ Матвейев йулташ Карабай Шăмăршăри колхозниксен пухăвĕнче ăнтăхса кайсах:

— Кăçалхи çул вăрманта ĕçлекенсем ваљљи епĕр халиччен пулман условисем туса паратпăр. Бараксем лайăх, ăшă. Лашă витисем сирĕн колхоз витинчен пĕре те кайа мар. Ĕç укçине вăхăтра тӳлетпĕр, таварсем çителĕклĕ,—тесе каласа панă.

Çакăн хыççăн Карабай Шăмăршăри „Хĕрлĕ партизан" колхозран лашапа ĕçлекенсем 10 çын тата çуранисем 12 çын вăрмана ĕçлеме кайрĕç. Хăйсемпе пĕрле ĕçе тухмашкăн кӳршĕри колхозсене ăмăртăва чĕнчĕç.

Халĕ Матвейев директорăн „нихăçан пулман условийĕсене" курăр-ха ĕнтĕ. Мĕнле кĕтса илеççĕ-ха вăрмана пыракан рабочисене? Сăмах вăрманти рабочисене парăпăр.

— Вăрмана пысăк хаваслăхпа тухса карăмăр. Çитсенех деçатнике пире баракка вырнаçтарма ыйтрăмăр, анчах вăл пире барак кăтартас вырăнне, алăне çеç сулчĕ. Барак шыраса тупрăмăр. Тултан пăхсан барак начарах мар. Шала кĕрсен пĕтĕмĕшпех урăхла. Барака мăк кĕртсе тултарнă. Мăччаран йур анса тулса, баракри мăк пăрланса шăнса кайнă. Койкăсем бăрак умĕнче пăрланса лараççĕ. Барака тасатса хутса йатăмăр та мăччаран, çăмăр çунă пек, тумла йухма тытăнчĕ.

Баракра мĕн пурĕ пĕр витре çеç. 40—50 çын апат пĕçерме тытăнсан çав пĕртен-пĕр витрешĕн тавлашу пырат. Баракра уборщица çук.

Тавар илес тесен, 2—3 çухрăма кайма тивет, анчах унта та махоркă çук. Иртнĕ çулсенче културмассăлă ĕçе лайăх йĕркеленĕччĕ. Хаçат-журналсем вуласа паратчĕç, докладсем итлеттĕмĕр. Акă 9 кун ĕçлетпĕр, докладчик мар, хамăр вулас тесен те пĕр хаçат тĕсĕ те курăймастпăр.

Ĕç укçи вăхăтра паратпăр текенсем, пире иртнĕ çулта декабĕр уйăхĕнче ĕçленĕшĕн те памаççĕ.

Ĕçленĕ ĕçсене вăхăтра йышăнмаççĕ. Палачах „вăхăт çук" сăлтавпа ирттереççĕ. Çавăн пирки автомашинăсем килсе епĕр купаланă штабĕлсем çинчен 100 пĕрене ытла турттарса кайаççĕ. Кайран вара пурте „епĕр айăплă мар" сăлтавпа витĕнеççĕ. Пирĕн ĕçленĕ ĕç ахалех сайа кайат,—теççĕ вăрмана ĕçлеме пынă колхозниксем.

Кăтартнă фактсем Матвейев совет организацин руководителĕн сăн-сăпатне сухатни, массăпа ĕçлеме пĕлменни çинчен калаççĕ. Матвейев икĕпитлĕнлĕнне пула ĕнтĕ вăрманпромхоз руководстви шанчăкран тухрĕ. Паллах, массă умĕнче шанчăкран тухнă руководствăран лайăх ĕçлессине кĕтмели те çук.

Ф. Рум.

Çулйĕр пайĕ аван ĕçлет

Быстрицкий йулташ йалсовет председателĕнчен Вăрнар райĕçтăвкомĕн çулйĕр пайĕн пуçлăхне лартнă. Вăл председател пулса ĕçленĕ чухне чылай çул хушши йалсовет малти вырăнта тăнă. Çакнă шута илсе ĕнтĕ ăна районта ĕçлеме илнĕ.

Быстрицкий йулташ çулйĕр пайĕнче те тăрăшса ĕçлени палăрат. Вăрнар районĕ 800 кубла метр ытларах чул, 4000 кубла метр хăйăр, 200 кубла метр йăвăç хатĕрленĕ.

Кăçал районăн 3 километр тăршшĕ шашкă сарса çул тумала. Ăна тума 2920 кубла метр йăвăç кирлĕ. Ку таранччен 200 кубла метр кăна хатĕрленĕ. Йăвăç татах хатĕрлеме райĕçтăвком укçа памасăр тăрат.

Е. Карташов.

Тĕрер йалсовечĕ ăмăртува тухрĕ

ТРАК. Тĕрер йалсоветĕнчи активиссем, агитаторсем тата колхоз правлени членĕсем пĕрле пухăнса 1938 çулхи çуракине хатĕрленесси çинчен ПСК(б)П Тĕпкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановленине сӳтсе-йаврĕç. Çакăн хыççăн çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе колхоз правленийĕсем ăмăртса ĕçлеме палăртрĕç. „Правда" колхоз „Пчелкино" колхоза кашни гектартан 150 пăтран кайа мар тĕштырă туса илме ăмăртува чĕнчĕ. Тĕрер йалсовечĕ Мадикасси йалсовечĕпе ăмăртăва тухрĕ. Ăмăрту договорне тума 5 çын уйăрса хăварчĕç.

С. Филиппов.

Йалсовет канцељарийĕ питĕрĕнсе тăрат

ÇĔРПӲ. Пысăк Чăрăш йалсоветне хаљхи вăхăтра ĕçлет тесе калама май çук. Икĕ ерне ĕнтĕ йалсовет канцељарийĕ çăрапа питĕрĕнсе тăрат. Работниксем ĕçкĕ-çикĕре.

Йалсовечĕ хăйĕн ответлă ĕçне йăлтах маннă: вăл колхозсене йертсе пымаст. Колхозсенче вăйлă тырпулшăн кĕрешӳ начар пырат-ха. Пĕр колхоз та çуракине хатĕрленсе çитмен, йалхуçалăх машинисене йусаса хуман. Вăрлăхсене кирлĕ таран суртламан. Минерал çăнăхне пĕр пĕрчĕ те кӳрсе килмен. Производствăлă плансем туса çирĕплетмен. Пĕр колхозра та лашасене çителĕклĕ пăхса тĕрĕс усă курмаççĕ. „Пучах" колхозăн витинче 12—15 çулхи ачасем ĕçлеççĕ. Лашасен вĕсене йĕркелĕ пăхман пирки, шăммисем çеç тăрса йулнă, нихăçан та тасатмаççĕ. Ытти колхозсенче те çавах.

Йалсовечĕ йединоличниксем çинчен йăлтах манса кайнă. Йединоличниксем вăрлăхсене пухса тасатса хуман, лашасăр хуçалăхсене лашаллисем çумне çирĕплетмен. Государствă умĕнчи парăмсене татасси те питĕ начар. 1937 çулхи аш-какай, сĕт-çу парас плана халĕ те тултарман. Йалсовет председателĕ Орешкин пайанхи куна пĕр пĕрчĕ çăм, çу памасăр тăрат. Займ укçи пухасси 10 процент çинче тăрат.

Пысăк Чăрăш йалсовечĕн çак кунсенчех хăйĕн тивĕçлĕ ĕçне пуçăнмала.

П. Павлов.

Обшчествăлă судăн ĕçĕ

Çăлпуç (Тăвай районĕ) йалсоветĕнче обшчествăлă суд пур. Судăн председателĕ Романов йулташ. Вăл аван ĕçлесе пырат. Ĕççыннисен жалăбисене вăхăтра пăхса тухса, ответ парат. Вăл ĕçлеме пуçланăранпа 1937 çулта 6 хут суд тунă.

1937 çулти октăберĕн 24-мĕшĕнче хăшпĕр колхозниксем выљăхсене йури çуркунне акса хăварнă клевĕр çине йарса çитерсе, ăна сийен кӳнĕ. Çак ĕçе Романов суд заседателĕсемпе пĕрле 1937 çулта октăберĕн 29 мĕшĕнче пăхса тухса клевĕре сийенлевĕ выљăхсен хуçисене 5 шер тенкĕ укçапа штрафламала решени йышăннă. Штрафсене шыраса илнĕ.

Романов ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур. 1937 çулти йанварĕн 4-мĕшĕнче, Киров йачĕпе тăракан колхозри правлени членĕсем, бригадирсем, коњухсем тата ыттисем пулнă пухура 4-мĕш бригадăн бригадирĕ Иванов Йегор хулиганла ĕçсем туни палăрнă. 1937 ç. йанварĕн 2 мĕшĕнче вăл ĕçсе ӳсĕрелсе каçхине çурçĕр иртсен Марсов Максим патне кĕрсе, унăн арăмне тĕрлĕ кирлĕ мар сăмахсемпе вăрçса пĕтернĕ. Çаксемшĕн ăна обшчествăлă суда панă. Романов çак ĕçе 1937 ç. ийунĕн 16-мĕшĕнче пăхса тухса, ăна 10-тенкĕ штрафламала, малала кун пекки ан пултăр тесе, Иванов Йегора асăрхатарса хăвармала решени йышăннă. Тĕрĕс йышăннă, анчах ĕçе пит те вăраха йанă.

Ал. Пикишкин.

60 çулхи карчăк чукунçул строителствинче ĕçлет

Трак районĕнчи „Исаково" колхозри Йевлампи Николайевнă 60 çула çитнĕ. Ватă пулин те вăл ĕçре çамрăксенчен йулмаст. Кăçал 203 ĕçкунĕ турĕ, 91 пăт тĕштырă илет.

Йанварте колхоз клубĕнче пуху пулчĕ. Йевлампи Николайевнă та пынă, вăл пухуран нихăçан та йулмаст. Пухура Канашпа Шупашкар хушшинчи чукун çула хăвăртрах туса пĕтерес майпа, уйрăм колхозниксене чукунçул туса пĕтеречченех ĕçе çирĕплетесси пирки калаçнă. Пухури халăх чукунçул çине ĕçлеме кайас хаваслăхпа килĕсене саланнă. Анчах пĕр Йевлампи Николайевнă çеç килне кăмăлсăр пулса таврăннă. Мĕншĕн тесен ăна чукунçул çине ĕçлеме йама палăртман пулнă.

Тӳсеймен Йевлампи Николайевнă. Вăл тепĕр кунхине ирех бригадир патне кайса, хăйне чукунçул çине ĕçлеме йама ыйтат. Бригадир ăна: „Кинемей, есĕ хаљ ватă, сан килте çеç лармала, чукунçулне туса пĕтерсен пуйăс çине ларса курсан та çитĕ сана",—тенĕ. „Ватă пулсан та ĕçре çамрăксенчен йулас çук епĕ",—тесе çиленнĕ пек пулса тухса кайат Николайевнă. Бригадирăн ирĕксĕрех ăна: „Ыран кил еппин, пĕрле кайăпăр,"—тесе ответлеме тивнĕ.

Йанварĕн 29-мĕшĕнчен вара Йевлампи Николайевнă чукунçул строителствинче ĕçлет ĕнтĕ. Вăл хăйĕн ĕçĕпе çынсене тĕлентерчĕ. Кулленхи нормăна 150—200 процент таран тултарат.

Т. Йефимов.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

ÇУРÇĔР КИТАЙРА

ХАҪКОУ, февралĕн 2-мĕш. (ТАСС). Шаҫси провинцин çурçĕр йенчи пайĕнче Китай партизанĕсене тата 8-мĕш çара хирĕç пыракан „Йапонин иккĕмĕш вăрçи" Йапони командованийĕ кĕтнĕ пек ăнăçлă пулман. Йапони командованийĕ кĕтнине пăхмасăрах Китай партизанĕсем чылай районсенче хўтĕленнĕ çĕртен тапăнма пуçланă. Хаҫ ĕнтĕ йалтах паллă, Йапонин 50 пин çынлă çарĕ хăйĕн танкĕсемпе, артиллерипе тата самоҫочĕсемпе те партизансемпе çапăçма пултараймасť. Йулашки ернере илнĕ пĕлтерўсем Йапони çарĕн тапăнассинчен ытларах сыхланмала пулни çинчен кăтартса параççĕ. Йанварĕн 23-мĕшĕнче çĕрле партизансем Динчжоу çине (Баодинран кăнтăрарах) тапăннă. Çапăçу çĕрĕпех пынă. Вăл çапăçу вăхăтĕнче Йапонин 30 салтак ытла вилнĕ. Йанварĕн 29 мĕшĕнче 500 çынлă Йапони отрйачĕ Сийанран (Пиндинран кăнтăрарах) çывăхри йалсене çаратма тухса кайнă. Хуларан тухсан вăл отрйада хирĕç партизансем тухнă. Çапăçу вăхăтĕнче 20 йапонец ытла вилнĕ. Йанварĕн 31-мĕшĕнче çĕрле партизансем Цiçан таврашĕнче (Таййуаҫрен кăнтăрала) кĕтмен çĕртен тапăннă вăхăтра 20 йапонец ытла вилнĕ. Çав кунах Сийан уйесĕнче йапонецсенчен çирĕм винтовкă туртса илнĕ. Йанварĕн 30-мĕшĕнче саккăрĕмĕш çар полкĕ Сун йертсе пынипе Динçавран (Таййуаҫрен 75 километрта çурçĕр хĕвелтухăçнеле) Йапони çарĕсене хăваласа кăларнă. Йанварĕн 28-мĕшĕнче 300 çынлă Йапони отрйачĕ Йуйçаҫран 10 километрта хĕвелтухăçнерех, Шитежан çывăхĕнче (Шаҫси провинцинчен хĕвелтухăçнерех) тунă атакине Китай çарĕсем сирсе пăрахнă. Çапăçура 20 йапонец ытла вилнĕ. Йуйçаҫ уйес хули (Шойуанран çурçĕреле) виçĕ хут аларан алла куçнă.

ЛОНДОН, февралĕн 2-мĕш. (ТАСС). „Таймс" хаçатăн Шанхайри корреспонденчĕ çапла çырать: Йулашки сведенисем тăрăх, Йапони çарĕсем Циндоаран тинĕс хĕрри тăрăх Лунхай чукунçулĕн пуçламĕш пункти пулса тăракан Хайчжоу порчĕ патнеле хăварт малала пыраççĕ.

Фронтсенчи лару-тăрусене анализ туса, корреспондент çапла çырť: „Фронтсенче кайала чакни Йапони политики мар, çавăнпа та йапонецсен Цзинин патĕнче пулнă ăнăçсăрлăх унта Йапони çарĕсене çĕнĕ çарсем йарса пулăшу пама çуккипе пулнă. Йапони çарĕсене çĕнĕ çарсем йарса пулăшу парасси йапонецсемшĕн йăвăр ĕç пулса тăнă, мĕншĕн тесен, Йапони çарĕсем Китай партизанĕсем активлă çапăçакан пысăк территорине сапаланса пĕтнĕ. Партизансен çапăçувĕсем, вĕсем Йапонин фронтпа çыхăнса тăракан çулĕсем çине татти-сыпписĕр тапăннисем Йапони командованине партизансемпе кĕрешес ĕçре пит нумай тимлĕх хума хушаççĕ". Китай командованийĕ,—тесе çырать малала корреспондент,—йапонецсене Лунхай чукунçулне тытса илес тĕлĕшпе çапăçма питĕ пысăк вăйсене пĕр çĕре пухма ирĕксĕрлени çителĕклех ăслă пулнă. Йапонецсем фронтан ытти участкисенчен илсе кунта çарсем пухаççĕ, „Йапонин çав пысăк çарĕ çапăçусене хатĕр пулсан, китайецсем те çавнашкалах хăйсен вăйне тăтартма хатĕр пулаççĕ пулмала".

ВАТАМ КИТАЙРА

ШАНХАЙ, февралĕн 2-мĕш. (ТАСС). Йапонецсем Путун районне унта çапăçакан партизансенчен „тасатма" хăтланни ăнăçлă пулман. Партизансем хаҫ те активлăн çапăçаççĕ. „Веҫвейбао" хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Китай отрйачĕсем усă куракан партизансен тактики вĕсем çине Йапони çарĕсен чылай пысăк ушкăнĕсем тапăнна чухне те çухатусем тăвасран хăтăлма май парать. Активлă çапăçнипе партизансем Чуҫшапа Наҫхуей хулисене (Шанхайран 15 тата 35 километрта кăнтăрала) тепĕр хут йышăнса илнĕ Чу ҫшашăн çапăçнă вăхăтра йапонецсем хайаран бомбăсем пăрахнă, анчах партизансене пысăк сийен тăваймаи. Партизансем активлăн çапăçни Хаҫчжоу районĕнче те палăрать.

„Шанхай Ивнинг пост" хаçат çапла çырать: партизансем, пĕчĕк отрйадсене пайланса, хаҫ йапонецсем йышăнса илнĕ вырăнсенче çапăçаççĕ. Партизансем кĕтмен çĕртен тунă атакăсем Йапони çарĕсен чаçесенче сехрине хăпартса кăларнă.

* * *

Хаҫкоуран пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 1-мĕшĕнче ирпе Китай çарĕсем Тянцзиҫ—Пукоу чукун çулĕн кăнтăр йенчи участкинче тепĕр хут контрнаступлени туma тытăннă. Çапăçусем çавнашкалах Линҫуайгуанран кăнтăр хĕвелтухăçнели районра та çĕнерен пуçланнă. Хуайхе йуханшывĕ урла каçакан чукунçул кĕперне китайецсем çĕмĕрсе тăкнă. Кĕпер çывăхĕнчи поçолăк Китай аллинче. Фронтăн мен пур участкинче 90 пин Йапони çарĕ пухнă. Ку районри йулашки çапăçусенче йапонецсем ултă пин çын таран çухатнă.

Гуанде хули (Аҫхуей провинцинче) темиçе хутчен те аларан алла куçса пĕтĕмĕшпех çĕмĕрлсе пĕтнĕ. Йанварĕн 13 мĕшĕнче Китай партизанĕсем вăл хулара тачăкланах çирĕпленнĕ. Тарса пĕтнĕ халăх йерипенех кайала таврăнать. Гуанде халĕ партизан йухăмĕн центрĕ пулса тăнă. Йулашки кунсенче Нанкинран кăнтăрала Хаçаҫ хули районĕнче хайар çапăçусем пыраççĕ. Хула икĕ хутчен аларан алла куçнă.

Ухуран кăнтăрарах Йапони çарĕсен ушкăнне йуханшыв хĕррине хĕсе пынă. Китай хаçачĕсем: партизансем Уху хулине кĕрсе кайнă тата вокзалта Йапони склачĕсене сиктерсе йанă, тесе пĕлтереççĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 2-мĕш. (ТАСС). Китайран пĕлтернĕ сведенисем тăрăх, Йапонин виçĕ карапĕ тата темиçе самоҫочĕ Диуэйан çине (Ухуран кăнтăр-хĕвелтухăçнеле) Йанцзы йуханшывĕ çинче бомбăсемпе вăйлăн пенĕ. Китайецсем хуларан куçса кайнă. Йапонецсем вăл районра десант антарса хăварма хăтланнă, анчах китайецсем контратакă тунипе Йапони десанчĕ ирĕксĕрех карап çине кайала таврăннă. Кун хыççăн китайецсем Диуэйан хулине йышăнса илнĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 2-мĕш. (ТАСС). „Дейли телеграф Енд морнинг пост" хаçатăн Гонконгри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: февралĕн 1-мĕшĕнче Йапони крейсерĕ Боккатигрис форчĕсене (Кантон çывăхĕнче) тухма хăтланнă, анчах Китай çарĕсем артиллерирен вăйлă пенипе Йапони крейсерĕн кайала тинĕсе кайма тивнĕ.

„Троцкиссем Йапони бомбисенчен те ытла сийен кўреççĕ"

Китайри троцкиссен бандин ирсĕр ĕçĕсем

Китайри троцкиссем Китай халăхне хирĕç сутăнчăклă ĕçсем тунин пĕтĕм йĕрĕнчĕклĕхĕ Китай халăхĕн нацилĕ ирĕклĕхĕшĕн пыракан вăрçăра уççăн палăрчĕ. Ирсĕр троцкиссĕн киревсĕр ĕçсем тума хăнăхса çитнĕ пĕчĕк ушкăнĕ, вăрçă пуçланиччен тахçан малтанах Йапони разведкипе сутăнпăскер, вăрçă пуçлансанах хăйĕн сийеплĕ ĕçне тума тытăннă.

Вăрçă пуçлансан пирвайхи уйăхсенчех Гуанси провинцинче троцкиссен ушкăнне тупса тытнă, вăл ушкăн пуçĕнче Хуан—Гун—Ду тăнă. Йапони войенщчинин вăл (Хуан—Гун—Ду) йертсе пынă агенчĕсем фронта çарсем йарассине хирĕç агитаци туса пынă. Гуансире Китай çарĕсем фронтра Йапони пусмăрçисене хирĕç паттăрăн çапăçнă вăхăтра, троцкиссем Гуанси провинцин правителствине хирĕç заговор тума тăрăшнă. Анчах вĕсем ăна тăваймаи. Сутăнчăксене киревсĕр ĕç тунă çĕртех тытса персе пăрахнă.

Хаҫ ĕнтĕ Çурçĕр Китайра троцкиссем сăтăрла, провокаторла ĕçсем туса пыни çинчен çĕнĕ фактсем палăрнă. Троцкис Сў Вей-ле тата ыттисем те вăрçă пуçланиччен малтанах Китайăн тĕп правителствине хирĕç тата Китайа пĕр чăмăр туса пĕрлештересине хирĕç йĕрĕнчĕклĕ ĕçсем туса пынă. Вăрçă пуçлансан малтанхи кунсенчех Йапони штабĕн агенчĕсем Çурçĕр Китайри генералсене Китайăн нацилĕ правителствине хирĕç тухма пур майсемпе те хĕтĕртнĕ.

Хаҫ персе вĕлернĕ Хаҫ Фу-цў генералăн Шаҫдун провинцин тĕп хулине—Цзинанье йапонецсене çапăçусăрах панăскерĕн сутăнчăкла ĕçĕнче те троцкиссем пысăк вырăн йышăннă. Хаçаха сутакансен киревсĕр ĕçĕсем Çурçĕр Китайра Йапони çарĕсене хăвăрттăн малала кайма май панă сăлтавсенчен пĕри пулнă,—кутĕлĕшпе хаҫ ĕнтĕ иккĕленмели çук.

Ответлă тапхăрта Китай халăхĕн саккăрмĕш паттăрла çарĕ Шаҫсин çурçĕр пайĕнче Йапони захватчикĕсене хирĕç çапăçнă вăхăтра троцкисла агентсем нацилĕ-революцилĕ çарĕн ăнăçлă операцисене чăрмантарас шутпа Сиане (Шенси провинцин тĕп хулине) пынă. Лаҫ Чжао троцкист Йапони укçи-тенкипе диверсантсен вăрттăн ушкăнне тунă. Мийан хулинче (Хенаҫ провинцин кăнтăр пайĕ) хула управленин председателĕ троцкис Цса Лу-йуҫ бандитсен шайкине организацилеме, çав шайкă Китай çарĕсен чаçĕсем çине уççăнах тапăнать. Икĕ ерне кайарах Йаҫаҫ йатлă хулара (Шаҫси провинци) виçĕ диверсант-троцкиса тытнă. Çитес сывăх вăхăтрах вĕсене уççăн суд тăваççĕ.

Хăйсен ирсĕр те киревсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса, вĕсене çапса аркатассинчен хăраса, троцкиссем „Сиҫхуа жибао" йатлă хаçат (Китайри компартин Тĕпкомĕн Хаҫкоури органĕ) редакци çине бандитла тапăннă.

Китай халăхне хирĕç ирсĕр те сутăнчăклă ĕçсем туса пырса, троцкиссем йапонецсем йышăннă районсенче Йапони войенщчинине пукапеле „правителствăсем" тума пулăшма тăрăшаççĕ. Китай халăхĕн Йапонийе хирĕçле вăйне хавшатас шутпа, троцкиссем наци оборони займне çырăнас ĕçе мĕн пур вăйпа кансĕрлесе пынă.

Йапони агенчĕсен—Китайри троцкиссен Китай халăхне хирĕç туса пыракан киревсĕр преступленисем — нимĕнпе çуса тасатма çук намăспа витĕннĕ. Китайри „Ассоциация национального спасения" лидерĕсенчен пĕри Шеҫ Чжуҫ-йў ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла каланă: „Китай халăхĕшĕн троцкиссем Йапони бомбисенчен те ытла сийен кўреççĕ",—тенĕ.

Шаҫси провинцинчи пĕтĕм халăх захватчиксемпе кĕрешет

Хаҫкоу хулине Америкă писателҫници Агнес Смедли çитнĕ. Вăл виçĕ уйăх хушши Китайăн 8-мĕш çар штабĕнче пулнă. Хаҫкоу хулине пырсан вăл çапла пĕлтернĕ: „Шаҫси провинцинчи пĕтĕм халăх Йапонийе хирĕç кĕрешме пĕр çĕре пĕрлешнĕ. Вырăнти халăхсем хушшинчен пухăннă Китайри нумай пинлĕ партизансем, йапонецсемпе çапăçма тăнăскерсем, вăрçă операцийĕсем вăхăтĕнче йур çинче çарауран утнă, йухан шывсем урлă каçнă чух мăй таранĕш пăрлă шывсем урлă ишсе каçнă. Халăхсем Йапони салтакĕсем çывăха çитсе тухнă чух хăйсемпе пĕрле çимĕç илсе йалĕсене пăрахса хăварнă, шыва ĕçмеле мар туса пăснă çăлсене пăраха-пăраха хăварнă."

Шаҫси провинцинчи çĕркăмрăк шахтисенчи горҫаксем—пурĕ 200 çын—Йапонецсем вĕсем патне çывхарса çитсен хĕçпăшалланă та арăмĕсемпе тата ачисемпе пĕрле хăрушлă мар вырăна кайма çул уçнă. Кайран, кĕтмен çĕртен сиксе тухса, Китайăн регуҫарлă çарĕсене Йапони çарĕсен чи вăйлă чаçĕсене çĕмĕрсе тăкма пулăшнă. Çавăн чухне йапонецсен пин çын вилнĕ тата вĕсенне 500 çын тыткăна илнĕ. Горҫаксене 61 çулхи хĕрарăм йертсе пынă. Ăна ăшшăн кăмăлласа партизансен амăшĕ тесе чĕнеççĕ. Вăл хăйĕн икĕ ывăлĕпе хĕпĕртесе мухтанать. Унăн пĕр ывăлĕ регуҫарлă çарсемпе пĕрле, тепри—партизансен ретĕнче." Йапони салтакĕсем çинчен тапратса, Агнес Смедли çапла паллă тăвать: вĕсенчен нумайăшĕсем хăйсен йулташĕсем тăвакан тискер ĕçсенчен хăйсем те ватанаççĕ. Тыткăна лекнисем (йапонецсем) нумайĕшĕсем хăйсем ывăнса çитни çинчен тата вĕсене фронта ирĕксĕр илсе кайни çинчен калаççĕ. (ТАСС).

ХРОНИКА

** ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Д. М. Хазан йулташа ССР Сойузĕн Çамăл промышленнăç Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулма çирĕплетнĕ.

** ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Н. Ч. Беспалов йулташа ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусствă ĕçĕсен комитет председателĕн заместителĕ пулма çирĕплетнĕ. (ТАСС).

Преподавателсем çитмеççĕ

Мўркашри ватам шкулти (Тутаркас р.) вĕренў ĕçĕ йапах пырăнта тăрать. Вуннăмĕш класра вĕренекенсем кĕркуннеренпех ĕнтĕ преподавателсем çуккипе алгебрă, тригонометри, чĕрчени тата урăх çĕршыв чĕлхи предмечĕсене вĕренмеççĕ. Çавăн пекех 9-мĕш класра та ĕç йапăх тăрать. Физикăпа вĕрентекен преподавател çук.

Чăваш Çутĕç халăх комиссариатĕнчен преподавател тупса пама шкул директорĕ Шишкин йулташ темиçе хут та ыйтнă. Унта ĕçлекенсем те шкула преподавателсем тупса памаççĕ-ха. Ф. Ш.

БИБЛИОГРАФИ

„Хатĕр пул" журнала лайăхлатмала

„Хатĕр пул" —Комсомол Чăваш Обкомĕ тата Çутĕç Халăх Комиссариачĕ пионерсемпе шкул ачисем валҫи уйăхра пĕрре кăларакан журнал. Çак журнал шкул ачисемпе пионерсен хастарлăхне çĕклентерекен, хаваслантаракан, клас тăшманĕсемпе кĕрешме вĕрентекен, ăслăлăхпа тĕпчев ĕçĕпе интереслентерекен хĕçпăшал пулса тăмала. Ўссе пыракан çамрăк арăва коммунисла воспитани парасси—журналăн тĕп задачи пулмала. Анчах „Хатĕр пул" журнал йапăх тухать, ачасен ыйтăвĕсене пурнăçламасть.

Мĕн çинчен вуласшăн-ха пирĕн шкул ачисем? Вĕсем çĕршывăн пур кĕтесĕнчи пуйанлăхсем, тинĕсри чĕрчунсем, вăрманти кайăксем, Çурçĕр полҫусĕ çинчен, йутпатшалăхсенчи ĕçхалăх ачисен пурнăçĕ çинчен вуласа пĕлесшĕн. Вĕсем пирĕн йуратнă сулпуççем çинчен, граждăн вăрçипе унăн геройĕсем çинчен, паттăр лҫотчиксемпе пограничниксем çинчен вуласа хăйсем те паттăр çынсем пуласшăн çунаççĕ. Кунсăр пуçне пионерсем хăйсен пĕлўне те ўстересшĕн. Çавăнпа та журналта вĕсем физикăпа, математикăла, техникăпа интереслентерекен материалсем, илемлĕ литературă произведенийĕсем вуласшăн. Анчах „Хатĕр пул" журнал ачасем валҫи материалсем пит сахал çырать.

„Хатĕр пулăн" 10 мĕшпе 11 мĕш номĕрĕсем иккĕшĕ пĕрле пĕр номĕр пек çеç тухнă. Журналта оригиналлă материалсем пит сахал. Çурри ытла вырăсларан куçарнă статйасем, калавсем. Куçарнă материалсен чĕлхи пит мăка, йавăр тата граматикăла йăнăшĕсем те нумай. Епĕр шкул ачисене тĕрĕс калаçма, çырма, вулама вĕрентмеле. „Хатĕр пул" вăл тĕлĕшпе примерлă журнал пулса тăмала.

Берковичăн „Салтычиха", Фадейевăн „Андрўшă" калавне чăвашла начар куçарнă. Сăмах çаврăнăшĕсем вырăсла тухнă, тĕлсĕр чăрăну паллисем лартнă. Тĕслĕхрен, „1759 çулти пĕр кĕрхи ирхине Вокшине йалĕнче, гайдуксем, Дарйа Салтыкова Кийевран килтуса, çитес кунсенче тавранассине пĕлтернĕ"... Çак предложенинчех вырăсла текст хыççăн кайса чăвашла куçаракан 4 йăнăш тунă. Вулакан ачасем кам куçарнине пĕлмеççĕ, мĕншĕн тесен, „Хатĕр пул" редакцийĕ ăна кăтартмасть.

Журналта ачасем валҫи йатарласа çырнă материалсен шутне Митта Петĕрĕн „Асатте калавĕсем" çеç кĕртме пулать. Калава çăмăл чĕлхепе пысăк шухăш парса çырнă, анчах ку питĕ çителĕксĕр. Журнал редакцийĕ чăваш литературин вăйĕсене хăйĕн ĕçне сахал йавăçтарать.

Кунсăр пуçне „Хатĕр пул" журнал шкулсенчен, пионер отрйачĕсенчен пачах пăрăнса, уйăрăлса кайнине те кăтартмала. Пионер отрйачĕсен, вожатăйсен, комсоргсен ĕçĕсем çинчен, шкулсенчи кружоксем çинчен тата ачасен шкул тулашĕнчи ĕçĕсене, вăхăтне йĕркелесси çинчен „Хатĕр пул" журнал пĕртте çырмасть.

Комсомол Чăваш Обкомĕн тата Çутĕç Халăх Комиссариачĕн çак хăйĕн задачине пурнăçласа пырайман тата массăран инçетре тăракан журнала чăн-чăн массăлă тата интереслă журнал тума тăрăшмала.

Ник. Дедушкин

Редакцирен

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн умстатйинче (нойабĕрĕн 23-мĕш, 1937 ç.)—„...Петров партипе совет тăн йертсе пыракан органĕсене ташманла етемсене: буржуалă националиссене, троцкиссене лартса тухнă" текен вырăнта Иванов йачĕ тăрать, анчах унта Ивановăн инициалĕсене кăтартман. Кунта сăмах Иванов Григорий çинчен пырать.

ИЗВЕЩЕНИЕ

На заседание комиссии по приему и исключению из рядов ВЛКСМ при Чуваш. ОК ВЛКСМ к 10 часам утра на 8-е февраля 1938 года в г. Чебоксары (ул. К. Маркса, дом № 13) для участия в разборе поданной апелляции.

ВЫЗЫВАЮТСЯ:

1. Дмитриев Архип Д. — Ст. Урмары, МКЖД, д. Ново-Исаково.
2. Филиппов Аркадий Ф.—Урмарский р., д. Б. Яниково.
3. Русаков Анатолий Ф.—Вурнарский р., с. Норусово, д. № 73.
4. Яковлев В. Я.—Ишлейский район.
5. Соловьева Евдокия Т.—г. Чебоксары, Управление связи.
6. Матвеев Василий И.—г. Чебоксары, с.-х. институт.
7. Немцева Мария В.—Яльчиковский р., д. Полевые Пинеры.
8. Белоусов Г. — г. Алатырь, Комиссариатская, 75.
9. Аверкиев Борис Я. — г. Алатырь.
10. Зубков Александр М.—г. Алатырь, Комиссариатская, 43.
11. Лермонтов Гурий—Мар-посад. Лесной техникум.
12. Орлов Николай Ф.—М.-Посадск. р., д. Яшерино.
13. Асанов Егор Т.—Канашск.р., д. Напольные Котяки.
14. Сергеев Василий—Канашск. р., дер. Мокры.
15. Радиков Иван Н.—Канашск. р., д. Ново-Шальтямы.
16. Муравьев Дмитрий С.—г. Канаш, железнодорожная НСШ.
17. Кротов Павел Р.—Канашск. р., Старые Шальтямы.
18. Волков Мануил С.— Шихазаны, средняя школа.
19. Прокопьев Павел П. — Шихазановск. р., д. Тузи-Чурино.
20. Прокопьева — Шихазановск. р., д. Тузи-Чурино.
21. Алешкин Василий—Ст. Шумерля. с. Б-Алгаши лесоруб.
22. Пятницкая Ольга В.—Янтиковский р., с. Янтиково, ср. школа.
23. Яковлева Александра — Янтиковский р., д. Тюмерово.
24. Яковлева Антонина—Ишлей, Райздравотдел.

Райкомы комсомола должны выслать в Обком комсомола своих представителей и обеспечить обязательную явку вызываемых лиц к указанному сроку.

Путевые расходы Обком оплачивать не будет.

Комиссия по приему и исключению из рядов ВЛКСМ при Чуваш. ОК ВЛКСМ

Хусанти В. И. Ленин музейĕ

В. И. Ленин Хусана 1887 çулхи ийуҫ уйăхĕнче килнĕ. Çав çулхи августăн 13-мĕшĕнче (çĕнĕ стилҫпе августăн 25-мĕшĕнче) ăна Хусанти университетăн йуридически факуҫтетне вĕренме илеççĕ. Çак вăхăтрах Владимир Илйичпа пĕрле Хусана Уҫйановсен çемйи те куçса килнĕ. Вĕсем Первайа горари—халĕ Ленин урамĕнчи Ростовă çуртне вырнаçнă. Ростовă çуртĕнче Уҫйановсен çемйи пĕр уйăх çурă пурăннă, унтан вĕсем Ново-Комиссариатск урамĕнчи (халĕ Комлева урамĕ) Соловйовă çуртне куçаççĕ. Соловйовă çуртĕнче Владимир Илйича арĕслеççĕ. 1887 çулхи декабĕрĕн 4-мĕшĕнче пулнă студентсен пухуне хутшăннăшăн ăна Кокушкино йалне йараççĕ.

Халҫхи вăхăтра В. И. Ленин музейĕ пулса тăракан çурта Уҫйановсен çемйи 1888 çулхи çентабĕр уйăхĕнче илнĕ. Вăл Йершовă уйĕнчен (ĕлĕк Арскойе уйĕ пулнă) инçех мар пысăк çырма хĕрринче ларать. Ăна йывăçран тунă. Çак çурта Уҫйановсен çемйи В. И. Ленина Кокушкино йалĕнчен Хусана пурăнма килме ирĕк панă вăхăтра илнĕ пулнă. Кунта Уҫйановсен çемйи Самар хулине (халĕ Куйбышев) куçса кайиччен—1889 çулхи майăн 15-мĕшĕччен пурăннă.

Уҫйановсен çуртне вĕсем пурăннă вăхăтри пекех тунă. Ку ĕçре Марийа Илйинична Уҫйановăпа Дмитрий Илйич Уҫйанов пысăк пулăшу панă. Ăна вĕсен кăтартувĕ тăрăх тунă. Çак тĕлĕшпе вĕсем 1936 çулта йатарласа Хусана килсе кайнă.

Çурт икĕ хутлă. Унăн пĕрремĕш хутĕнче икĕ пўлĕм (вĕсене çурт хуçи Орловă йышăнса тăнă), кухҫă тата кухҫă çумĕнче пĕр чўречелĕ пĕчĕк пўлĕм—В. И. Ленин пўлĕмĕ. Чўрече умĕнче сĕтел ларать, ăна шур скатĕртпа витнĕ. Сĕтел çинче—чернилницă, ручкă карандаш тата Карл Марксăн „Капитал" кĕнеки. Кунтах икĕ пĕчĕк етажеркăсем тăраççĕ, вĕсем çинче вырăс классикĕсемпе социаллă-екномикăлă литературăсем. Сĕтел çумĕнче пĕр минтерлĕ кроваť ларать, кроваť тĕлĕнче географи карти çакăнса тăрать. Кăмака плити çинче майласа хунă шахмăт хăми. Пўлĕмре урăх нимĕн те çук. Çак пўлĕмре етемлĕх генийĕ В. И. Ленин ача чухне пурăннă.

„...Кунта вăл Карл Маркс „Капиталĕн" 1-мĕш томне вĕренме пуçланă,—тесе çырнă Ленин çинчен асаилнинче Анна Илйинична Уҫйановă—Елизаровă.

Çуртăн иккĕмĕш хутĕнче—Уҫйановсен столовăйĕ. Пысăк сĕтел, унăн тĕлĕнче лампă çакăнса тăрать. Кунтах лармалли тенкелсем тата авалхи ройаҫ. Стена çумĕнче икĕ пысăках мар етўд. Чечексем. Столовăйĕнчен В. И. Ленин амăшĕ—Марийа Александровнă пўлĕмне алăк тухать. Пўлĕмре 3 кроваť лараççĕ, вĕсене шурă одейалсемпе витнĕ. Кунта Марийа Александровнăпа пĕрле В. И. Ленин йăмăкĕсем—Оҫгăпа Марийа пурăннă. Марийа Александровнă пўлĕмĕ çумĕнче тата икĕ пысăках мар пўлемсем. Вĕсенчен пĕринче Анна Илйинична, тепринче — Димитрий Илйич пурăннă. Пур пўлĕмсене те пĕр пек стилҫпе майланă, вĕсем хăйсен куҫтурлăхĕпе тĕлĕнтереççĕ.

Пĕрремĕш хутри хуçа пурăннă пĕр пўлĕмре халĕ Уҫйановсен çемйин фотокарточкисемпе портречĕсем тата В. И. Ленин Хусанта пурăнни çинчен каласа паракан документсен витринине вырнаçтарнă.

Музей Владимир Илйич Ленинăн Хусанта пурăннă вăхăтри пурнăçне питĕ лайăх кăтартса парать. 1888 çулхи кĕркуннепе хĕлле Н. Е. Федосейев йертсе пынипе Хусанта революцилĕ кружоксем организациleççĕ. Владимир Илйич та Федосейев организацилленĕ кружоксенчен пĕрин членĕ пулса тăнă. В. И. Ленин Федосейева питĕ пысăк хак панă, вăл ăна „талантлă, хăйĕн революцилĕ ĕçне чĕререн парăннă çын", тенĕ.

Полици В. И. Ленин Хусанта Федосейев кружокĕсемпе çыхăну тытни çинчен пĕлнĕ. Çакăн хыççăн полици В. И. Ленин хушамачĕ хыçне „унăн пăсăк туртăм пур", вăл „шанчăксăр çынсемпе çыхăннă" тесе çыра-çыра хунă.

Владимир Илйич Самара пурăнма куçнă хыççăн, Хусанта Федосейев кружокĕсене жандармăсем çĕмĕрсе тăкнă, кружок членĕсене пурне те арĕсленĕ.

Музей В. И. Ленинăн 17—19 çулта чухнехи пурнăçĕ çинчен тата унăн революцилĕ кĕрешĕвĕ çинчен лайăх кăтартса парать. Çакă пуринчен ытла çамрăксемпе шкулсенче вĕренекен ачасене хытă интереслентерет. Вĕсем В. И. Ленинран пример илме тăрăшаççĕ. Çамрăксем В. И. Ленин пек пулма, коммунисăмшăн вирлĕн кĕрешме сăмах параççĕ.

Ĕçхалăхĕсен çулпуçĕ И. В. Сталин В. И. Ленин пирки çапла çырнă:

„Илйича, пирĕн учителе, пирĕн çулпуçăмăра асра тытăр, йуратăр, вĕренĕр.

Тăшмансĕне хирĕç,—шалтисене те тултисене те хирĕç,—Илйич пек кĕрешĕр, çĕнтерĕр.

Çĕнĕ пурнăçа, çĕнĕ йалана, çĕнĕ куҫтурăна Илйич пек тăвăр.

Ĕçри пĕчĕк йапаларан нихçан та ан пăрăнăр, мĕншĕн тесен пĕчĕкрен пысăкки пулса тăрать,—Илйичăн паха хушăвĕсенчен пĕри çакăнта",—тенĕ. Çак чĕнĕве çамрăксем йаланах асра тытаççĕ, вĕсем ăна ĕçре, пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

В. И. Ленинăн Хусанти музейне Октăбĕрти социалисăмлă Аслă революци 20 çул тултарнă тĕле уçнă. Çак кĕске хушăрах музейе темиçе пин çын пырса курнă. Иртнĕ çулхине икĕ уйăх хушшинче кăна В. И. Ленин музейĕнче 4.354 çын, кăçал йанвар уйăхĕнче 29 кун хушшинче 6.624 çын пулнă. Музейа Совет Сойузĕн пур кĕтесĕсенчен те курма килеççĕ. Екскурсантсем хушшинче москвичсемпе чăвашсене тата украинецсемпе марийецсене тата ыттисене те курма пулать. Вĕсем пурте етемлĕх генийĕн—Владимир Илйич Ленинăн ача чухнехи пурнăçĕпе, унăн революцилĕ ĕçĕсемпе лайăхрах паллашма тăрăшаççĕ. Ленинăн Хусанти музейĕ етемлĕх генийĕн пурнăçĕпе ĕçне вĕренес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Н. В.

Хусан.

Ответлă редактор ĕçĕсене тăваканĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Суту-илў Халăх Комиссариачĕн Вĕренў комбиначĕ

Повăрсен курсĕнче вĕренме ЙЫШĂНАТЬ

Курсра—апат-çимĕç пĕçерекен повăрсене вĕрентсĕ хатĕрлеççĕ.

Курса — 18 çулхисенчен 40 çулхисем таран, пуçламĕш шкулта 4 çултан кайа мар вĕреннисене йышăнаççĕ.

ВĔРЕНМЕЛИ СРУК 3 УЙĂХ.

Зайавленисене февралĕн 15-мĕшĕччен илеççĕ. Апат-çимĕç таврашĕнче ĕçлекенсене курса илнĕ чух малтан суйласа илеççĕ.

Курса йышăннисене уйăхне 150 тенкĕ стипенди параççĕ.

Зайавленисене çак адреспа йамала: ШУПАШКАР, ХĔРЛĔ ПЛОШЧЕĎ, СУТУ-ИЛЎ ХАЛАХ КОМИССАРИАЧĔН ВĔРЕНЎ КОМБИНАТНЕ.

Академи театрĕнче

Февралĕн 5-мĕшĕнче

Вырăсла спектаҫ

Б. ЛАВРЕНЕВ

„РАЗЛОМ"

4 пайлă

С. С. Марťагин лартать. Художник Йе. Н. Сапожников. Балетмейстер М. Д. Йаницкайа.

Талон № 101. Абонемент № 10, Талон № 11.

„ЧĂВАШКИНО" ТРЕСТНЕ

Економист-плановик тата Бухгалтер ревизор кирлĕ

Заҫати вăхăтĕнче „Чăвашкино" тресчĕн аслă бухгалтерĕ патне пымала. Саслă кино-театр çуртĕ.

2—1

„Чăваш коммунĕ" çырăнса илмалли хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха —7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 59. Гор. Чебоксары. Типография № 1 Чуваш полиграфтреста. Заказ № 83. Тираж 15.500 82—94 см. 1—1 п. л.